Чебоксары
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАЙ
8
ВЫРСАРНИКУН
103 (4916) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-ĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Çуракине пысăк пахалăхпа тата кĕске вăхăтра ирттерер

Чăваш республикинчи кăнтăр йенчи районсем суракине кăçал массăлăн апрелĕн 20—22-мĕшĕсенче тухрĕç. Апрелĕн йулашки кунĕсенче суракине ытти районсемте тытăнчĕç. Майăн 5-мĕшне республика тăрăх тĕштырăсене пурĕ 102.106 гектар акса плана 34,6 процент тултарнă. Çакă вăл ака ĕçĕн хăвăртлăхĕ сителĕксĕр пынине кăтартать. Майăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 5 кун хушшинче, ака ĕçĕ чи хĕрӳллĕ пынă вăхăтра, мĕн пурĕ те 46 пин гектара йахăн çеç акнă. Малашнехи кунсенче те çавăн пекех акса пырсан, тĕштырăсене акмалли плана тултарса ситерме татах 5—6 кун кирлĕ пулать.

Ака ĕçне çавăн пек вăрăм вăхăта йамаллине те пултараймастпăр ĕнер. Вăйлă тырпулшăн кĕрешесси задачи, çаванпа пĕрлех тата вăсен республикăсем хушшинчи социалисăмла ăмăрту договăрĕ сураки ĕçне кĕске срукра, мĕн пурĕ те 6—8 кун хушшинче туса пĕтерме хушать.

Патăрйел, Шăнкăртам тата Куславкка районĕсем акса пĕтерес патне çитеççĕ. Çав вăхăтрах Турхан, Йĕпреç, Кувакино, Улатăр тата Пăрачкав районĕсем вĕсенчен чылай кайа йулнă. Уйрăмах Елĕк, Ишлей, Тутаркас, Çĕрпӳ районĕсем начар ĕçлеççĕ. Ку районсенче сураки ĕçне массăлăн тытăннăранпа 6—7 кун хушшинче тĕштырăсене акмалли плана мĕн пурĕ те 10—18 процент тарри çеç тултарнă.

Майăн тырпул туса илесси вăл чи малтанах сураки ĕçне лайăх пахалăхпа тата кĕске срукра ирттериничен килет. Ăна пурте пĕлеççĕ. Анчах ĕç çав тĕрлĕ тӳсме çук вăрăма кайни мĕнле сăлтавсенчен килет-ха?

Ку вăл, чи малтан, районсенчи парти тата совет организацийĕсен руководителĕсем, çĕрĕç тата МТС работникĕсем пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешесе ĕçе чăн большевиклла организацилеменнинчен, ĕçе кирлĕ пек йертсе пыманнинчен килет. Социалисăмла ăмăртăвăн хĕрӳлĕхне вăйлатса массăна мобилизацилес вырăнне хăшпĕр районсем ĕçе тухсан ăмăрту çинчен мансах кайнă.

Йĕлчĕк районĕ Патăрйел районĕпе социалисăмла ăмăртса ĕçлет. Йĕлчĕк районĕн руководителĕсем калаçнă тăрăх, Патăрйел районĕ вĕсенчен малтанрах акса пĕтерет. Патăрйелсем тата — пирĕнтен малтан Йĕлчĕксем акса пĕтереççĕ теççĕ. Ăçта кунта ăмăртура мала тухассищĕн тăрăшни? Çавăн хыççăн ĕнтĕ вĕсем икĕ çĕрне хушшинче те тĕштырăсене акса пĕтерменнинчен тĕлĕнмелли нимĕн те çук.

Çĕр пит хăвăрт типсе пырать. Çапла пулин те хăшпĕр вырăнсенче çĕр „тачка" тесе ака ĕçне тухмасăр тăраççĕ. Елĕк районĕнче Чăваш Сормă йалсоветне кĕрекен колхозсенче çĕр „тачка" текен сийенлĕ шухăш майăн 4-мĕшне çитиччен тымарланса тăнă. Ишлей районĕнче те „Партин 17-мĕш сийесĕ" колхозра çĕр „тачка" тесе майăн 5-мĕшне çитиччен акмасăр тăнă. Районри çĕрĕç работникĕсем çав сийенлĕ шухăшсене вăхăтра çапса хуçайман.

Тырпулсене хăвăрт çеç мар, тата лайăх акас пулать. Анчах, калас пулать, йалхуçалăх ĕçĕсен пахалăхĕшĕн кĕрешесси партипе совет организацисен, çĕрĕç пайĕсемпе МТС работникĕсен тата колхоз руководителĕсен тимлĕхĕнче халь те тĕп вырăн пулса тăрайман. Елĕк районĕнче „Труд", „Хĕрлĕ Сормово" тата „Безбожник" колхозсенче майăн 4-пе 5-че те сейалкăсем ĕçсĕр ларнă. „Партин 16-мĕш сийесĕ" колхозра тухă вăрăхне çумкурăксенчен тасатмасăр акса хăварнă. „Хĕрлĕ Сормово" тата „Знамя" колхозсенче йаровизацилене тесе йĕпетнĕ вăрлăх акнă, тата „Радио" колхозра йаровизацилене вăрлăха ытлашши выртарнă.

Çавăн пекех Трак районĕнчи „Çĕнĕ вăй" тата Сталин йачĕпе тăракан колхозсенче те вăрлăхсене çумкурăксенчен тĕплĕн тасатмасăр акнă.

Ака ĕçĕ вăрăма кайнăшăн, ĕç пахалăхĕ начар пулнăшăн, чылай районсенче тата машинă-трактăрлă станцийĕсем айăплă пулса тăраççĕ. Йĕлчĕк, Патăрйел тата Шăхасан районĕсенче трактăрсем кирлĕ пек йĕсаман тата трактăрсене ĕçе тивĕçлипе организацилемен пирки трактăрсем час-часах ĕçсĕр лараççĕ. Уйрăм трактăрсенĕн лайăх опычĕсем çинчен ытти трактăристсене калаçа памаççĕ. Орденоносĕц Павлăв трактăр бригадин лайăх ĕç тĕслĕхĕсем çинчен чылай трактăристсем пĕлмеççĕ те.

Трактăрсемпе лайăхрах усă курмала. Тракри машинă-трактăрлă станцийĕн Митрофанăв трактăрне сменăра 9 гектар сухаласа хăйĕн нормине 150 процент тултарса пырать. Елĕкри машинă-трактăрлă станцийĕн трактăристсенчен П. Федăрав 8-шер гектар, Марйăрăн 12-шер гектар сухалаççĕ. Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ трактăрсен ĕç тухăçне чылай ӳстерме май пуррине аван кăтартса параççĕ. Кăçал трактăрсемпе иртнĕ çулхинчен аванрах ĕçлеме, вăсен республикă хушшинчи социалисăмла ăмăрту договăрĕпе тăрăх трактăр пуçне 800-шер гектартан кайа мар сухалама кирлĕ условисем МТС-сен пурте пур.

Сураки ĕçне сутă-илу организацисен тивĕçлипе хутшăнмала, колхозниксене лайăх кирлĕ таварсене вăхăтра тăратмала. Анчах та вĕсем хĕрӳлĕ ĕç вăхăчĕ çинчен маннă пулас. Ăна çак тĕслĕх те аван кăтартса парать: колхозниксем хĕрсех уйра ĕçлеççĕ, анчах Вăрнар Йалпов (Елĕк р.) Килдешри отделенийĕ сахăрпа спичка та кӳрсе килмен.

Сураки тĕлĕшпе парти организацийĕсен умĕнче пысăк ответлă тăрать. Колхозла йал майăн пĕрремĕшне тата РСФСР-па ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанине социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма татах вăйлатнипе кĕтсе илчĕ. Парти организацийĕсен халь нихăçанхинчен ытларах партилĕ-массăлă ĕçе анлăн сарса йамала, политикăла тата производствăла çĕкленĕве татах та вăйлатмала.

Партилĕ-массăлă ĕçе лайăх организацилени колхозсенче сураки ĕçĕ те ăнăçлăн пулса пынине, колхоз членĕсен йышĕ ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем пирĕн сахал мар. Анчах чылай çĕрте колхоз руководителĕсем çав ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ. Ишлей районĕнчи „Большевик" колхоз председателĕ, коммунис Иершов, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановленисем çинчен халиччченех массă хушшинче ăнлантарса паман. Бригадăсенче хаçат вулакансене те уйăрман.

Çĕрĕç тата МТС работникĕсем çĕршыв умĕнче пысăк екзамĕн тытаççĕ. Вĕсем социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма организацилекенсем пулмала. Парти тата совет организацийĕсен кашни районра, кашни колхозра сураки ĕçне большевикла йертсе пырса хăвăрт та пысăк пахалăхпа вĕçлесе çитермеле.

Карл Маркс 1867 çулта (Сойузфото).

Суйлав умĕнхи пухусенче

Аслă Совет Сойузĕнчи республикăсенче республикăсен Верховнăй Совет депутачĕсене суйлама кандидатсем тăратма суйлав умĕнхи пухусем пулса иртеççĕ.

Азербайджанри Сталин йачĕпе тăракан нефт тасатакан савăтра майăн 6-мĕшĕнче Бакура суйлав умĕнхи пирвайхи пуху пулса иртнĕ. Савăт клубне рабочисем, инженерсемпе техниксем, служăщчисем пурĕ 1.500 çын пухăннă.

Паллă стахановĕц Гамзин йулташ Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама пĕрремĕш кандидата тĕнчери чи демократилĕ Конституцине тăвакана — Иосиф Виссарионăвич Сталина тăратма сĕннĕ, унăн сĕнӳне тăваллăн алă çупса йышăннă. Йуратнă çулпуçне чысласа пурте ура çине тăрса оваци тунă.

Пуху пысăк çĕкленӳпе çакăн пек резољуци йышăннă:

„Епĕр Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама пĕрремĕш кандидата Сталин йултаща тăрататпăр.

Епĕр кандидатурăсене Сталинăн шанчăклă соратникĕсене — Вйачеслав Михайлăвич Молотăва, Лазăр Моисейĕвич Кагановича, Климент Йефремăвич Ворошилăва, Николай Иванăвич Йежова тăрататпăр. Епĕр Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата Лаврентий Павлăвич Берийа тата Мир Джафар Багирăва тăрататпăр".

Батумири предприйатисенче те суйлав умĕнхи пухусем пысăк çĕкленӳпе иртеççĕ.

Батумири Сталинск округĕнчи 600 суйлавçă Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата нефт тасатакан савăтри чи паллă çынна — орденоносĕц Мамед Йечинăвич Пагайĕва тăратнă.

Савăта ĕçлеме пыриччен Пагайĕв йулташ çĕр чавакан рабочи пулса ĕçленĕ. Техникăна большевикла вĕренсе пырса, вăл пысăк квалификацилĕ рабочи пулса тăнă. Унăн ĕçне правителствă ăна пысăк наградă — „Знак Почета" орденĕ парса паллă тунă.

Аджари АСС Республикĕн. Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата партин Аджари облаç комитечĕн çекретарне Саджанă йултаща тата çу тасатакан савăтри паллă стахановкăна — Зубкова йултаща палăртнă.

Майăн 5-мĕшĕнче Тбилисире суйлав умĕнхи пухусем çирĕме йахăн пулса иртнĕ. Пухусем пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Кирăв йачĕпе тăракан станоксем тăвакан савăт коллективĕ Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама пĕрремĕш кандидата Иосиф Виссарионăвич Сталина палăртнă. Çав пухурах Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене Грузи большевикĕсен руководителне Берийа йултаща тата рабочирен савăт директăрĕ пулнăскерне — Николай Галактионăвич Орджоникидзене тăратнă.

(ТАСС).

Узбек СС Республикинчи суйлав умĕнхи пухусем

Пухусенче Узбек ССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйлама кандидата И. В. Сталин, В. М. Молотăв, Н. И. Йежов, У. Йусупăв йулташсене палăртнă

ТАШКЕНТ, майăн 4-мĕш. Ташкентри Сталин йачĕпе тăракан пир-авăр тĕртекен комбинатра ирхи сменăра ĕçлекен рабочисем, служăщчисем, инженерлă-техниклă работникĕсем мĕн пурĕ 3.000 çын Узбек ССР Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсем палăртма пухăннă.

Пухура пулнисем пысăк çĕкленӳпе Узбек ССР Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата И. В. Сталин, В. М. Молотăв, Л. М. Каганович, К. Е. Ворошилăв, Н. И. Йежов, У. Йусупăв йулташсене палăртма йышăннă.

Пуху Сталин йулташ патне саламлă телеграммă йанă.

(ТАСС).

Калайкассинчи агитатăрсен коллективĕ

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ хăçан пуласси пирки калаçу пуçарсан, „Марксист" колхозри 68 çулхи Мазуринă Йеленă: ийунĕн 26-мĕшĕнче, — тесе каласа парать.

Шкулти учителницă Йе. Трофимăвă й. суйлав çинчен лайăх ăнлантарса парать, Епĕр халĕ Положени тăрăх суйлав мĕнле, хăш кун пулмалине пурте лайăх пĕлетпĕр" теççĕ колхозницăсем. Агитатăр Квасковă йулташ Калайкас йалсоветĕнче агитатăрсен коллективне йертсе пырать. Коллективра 14 агитатăр, вĕсемпе пĕрле пухăнса семинарсем, канашлусем туса ирттерет. РСФСР тата Чăваш АССР Конституцийĕпе Верховнăй Совета суйламали Положенисене ăнлантарас ĕç пынă вăхăтра агитатăрсемпе 6 семинар, 3 хут канашлу туса ирттерчĕ.

Агитатăрсен коллективĕнче пултаруллă çынсем. Квасков А. Н., Клопăв Г., Трофимăвă Н. Т. агитатăрсене колхозниксемпе йединоличниксем йалапах лайăх хак параççĕ.

Ç. Горланăв.

Йутçĕршывсенчен килнĕ рабочисен делегацисем Мускавра

Мускава Май уйавне килнĕ йут çĕршывсенчи рабочисен делегацисене столицăра пур çĕрте те ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Йут çĕршывсенчен килнĕ хăнасем Мускавра пулнă вăхăтра В. И. Ленинăн Тĕп музейне кĕрсе курнă, майăн 1-мĕшĕнче парадпа демонстраци пынă вăхăтра Хĕрлĕ плошчĕдре пулнă, ССР Сойузĕн Пысăк театрĕнче пулнă, унта вĕсем „Броненосец Потемкин" оперăна курнă, çавăн пекех тата Мускаври Л. М. Кагановăч йачĕпе тăракан метрополитенпа паллашнă.

Майăн 4-мĕшĕнче йут çĕршывсенчи рабочисен делегацисем Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтра пулнă. Вĕренӳ комбинатĕнче савăт директăрĕ Лихачов йулташ йут çĕршывсенчен килнĕ хăнасемпе калаçу туса иртернĕ. Вĕсене вăл автогиганта çĕнетсе аслăлатни çинчен, автомобилсем тăвас тĕлĕшпе Совет Сойузĕ çĕнĕ çитĕнӳсем туни çинчен каласа панă.

Хăнасене савăтăн чи пысăк цехĕсене: механосборăчнăй, тимĕрçсен цехне, грузовиксемпе çăмăл автомобилсен конвейĕрĕсене тата инструменталнăй цеха кăтартнă. Савăтри стахановĕцсен — Бобков, Оленĕв, Королов йулташсен хватерĕсенче пулнă. Унтан вĕсем културă двоpецне кайса курнă.

Каçхине културă дворецĕнче Сталин йачĕпе тăракан автосавăтри рабочисем йут çĕршывсенчен килнĕ хăнасене кĕтсе илнĕ.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Пушартан сыхланас тĕлĕшпе тумали ĕçсем çинчен

Мускавра, Ленинградра тата ытти хуласенче пушартан сыхланас ĕçе вăйлатас шутпа пысăк хуласенче çав ĕçе организацилессинче пĕрлĕх тăвас тата предприйатисенче пушара хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе рабочисенчен тата служăщчисенчен ирĕклĕ организацисене тăвас шутпа, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнна:

1. Мускав, Ленинград, Кийĕв, Ростăв, Свердловск, Горьки, Харькăв тата Одесса хулисенчи савăтсемпе хапрăксем çумĕнчи пушара хирĕç кĕрешекен командăсене пурне те ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн хуласенчи пушартан сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен тытăмĕсене парас. Çак ĕçе 1938 çулхи ийулĕн 1-мĕшне туса пĕтермеле.

2. ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатне çав йышăнна ведăмствăла пушар командисен шучĕпе халиччен хуласенче пулнă пушар командисене вăйлатма тата вĕсене çĕнĕрен тума хушас, предприйатисенчи пушартан сыхланас ĕçе вăл шутрах халĕ пушар командисене урăхлатса йĕркелене предприйатисенче те лайăх йĕркелесе йама хушас.

3. ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн хулари пушар охранине ведăмствăла пушар охрани ĕçлеме чарăнакан командисен автонасосĕсене, автомеханически пусмасене тата пушара хирĕç кĕрешмели цистернăсене, çавăн пекех тата пушар деповсене, общежитисемпе складсене парас.

4. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн хуласенчи çĕнĕрен организациленекен пушар командисем ăçта пулмаллипе сыхăнакан ыйтусене, вĕсене ведомствăла пушар командисен çурчĕсемпе инвентарĕсене парассипе сыхăнакан ыйтусене татса парассине комисисем çине хурас. Вăл комиссисен составĕ çаксенчен тăрать: çав хулари хула совет председателĕ (комисси председателĕ), ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн представителĕ тата çак ĕçпе интересленекен предприйатин представителĕ.

5. Çак постановлени тăрăх ведомствăла пушар охранин командисене пĕтерне предприйатисенче пуринче те рабочисенчен, инженерла-техникла работниксенчен тата служăщчисенчен пушарпа кĕрешекен ирĕклĕ дружинăсем тумала, çав дружинăсем çине пушартан асăрхаттарас тата пушарсем пулсан малтанхи пулăшу парас ĕçе хурас.

Предприйатисенче пушар дружинисене вăхăтра туса йĕркелес ответлăха предприйатисен руководителĕсем çине хурас.

Предприйатисенчи пушара хирĕç кĕрешекен ирĕклĕ дружинăсен составĕ мĕнле тăнине тата унта çынсем суйласа илессине, çавăн пекех предприйатисенче пушарпа кĕрешмели ĕçсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине контрол туса пырассине ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн государствă пушар надзорĕ çине хурас.

6. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн пушар охрани усă курман ведăмствăла пушар охранин деповĕсене предприйатисенчи пушара хирĕç кĕрешекен ирĕклĕ дружинăсене парас. Предприйатисен руководителĕсем тата Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн пушар охранин органĕсем пĕрле калаçса татăлнă тăрăх, предприйатисенчи ирĕклĕ дружинăсене çавăн пекех ĕçре кирлĕ пулакан автонасоссемпе автоцистернăсене те памала.

Ведăмствăла пушар охранин урăхлатса йĕркелене командисен пушара хирĕç кĕрешмели ытти пĕтĕм инвентарĕсене предприйатисен руководителĕсем пăхнă тăрăх усă курма предприйатисенчех хăварас.

7. 1938 çулхи майăн 1-мĕшĕнчен пуçласа ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн республикă, край тата облаç центрĕ пулса тăракан хуласенчи пушар охрани валли ĕçукçине вăтамран 20 процент таран ӳстермеле тăвас. Ĕçукçине хуласем тăрăх уйрăмăн палăртмала, вĕсем пилĕк ушкăна уйăралаççĕ. Пĕрремĕш ушкăна çаксем кĕреççĕ: Мускав, Ленинград, Кийĕв, иккĕмĕшне — Ростов, Свердловск, Горьки, Харькăв, Одесса тата ыт. те.

8. ССР Сойузĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн хуласенчи пушар охрани работникĕсем валли, пĕрлĕхлĕ ĕçукçи тунă хуласенче, çав ĕçре нумай вăхăт хушши ĕçленĕшĕн хăйсем илекен уйăхри тĕп ĕçукçи çумне хушса çакăн чухлĕ тӳлемеле тăвас:

15 процент — пушар охранинче икĕ çул ытла пĕрмайах ĕçленĕ пулсан;

25 процент — пушар охранинче çав ĕçре пилĕк çул ытла пĕрмайах ĕçленĕ пулсан;

40 процент — пушар охранинче вунă çул йе ытларах пĕрмайах ĕçленĕ пулсан.

Çакăнпа пĕрлех ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ предприйатисенчи ирĕклĕ дружинăсем çинчен положени çирĕплетнĕ.

„Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕç-Çар Флочĕ XX çул тултарни" йатлă выставкă уçăлнă

Майăн 6-мĕшĕнче Мускавра „Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕç-Çар Флочĕ XX çул тултарни" йатлă пысăк та илемлĕ выставкă уçăлнă. Выставкăна пурĕ çирĕм залăра вырнаçтарнă; Унта совет художникĕсемпе скулпторĕсен чи лайăх ĕçĕсене 450 ытла илсе пынă.

Уйрăмах тĕп зал паллă пулса тăрать. Кунта пир çине ӳкерне картинăсене чылай вырнаçтарнă, вĕсем хушшинче А. В. Моравăвăн „В. И. Ленинпа И. В. Сталин калаçура", А. М. Гераçимăвăн „И. В. Сталин тата К. Й. Ворошилăв", И. И. Бродскин „Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойуз Маршалĕ К. Й. Ворошилăв йĕлтĕрпе йаранни", В. С. Сварогăн „Сталин йулташ тата ПСК(б)П Тĕпком Политбӳро членĕсем Тушинăри аеродромра", И. В. Сталин, В. М. Молотăв, М. И. Калинин, А. И. Микойан, Н. И. Йежов йулташсен потречĕсем. Çав залрах тата З. М. Виленский скулпторăн Çергей Миронăвич Кирăвăн граждăн вăрçи вăхăтĕнчи ĕçĕпе пурнăçне кăтартакан пысăк статуйĕ пур.

Выставкăна уçăччен малтан унта Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойуз Маршалĕ К. Й. Ворошилăв йулташпа Халăх Комиссарĕн заместителĕ пĕрремĕш рангри командарам И. Ф. Федько йулташ пырса курнă.

(ТАСС).

Карл Осецкий вилнĕ

Майăн 4-мĕшĕнче Берлинра фашисăма хирĕç кĕрешнĕ паллă çын тата писател Карл Осецкий вилнĕ.

Ăна фашиссем асаплантарса вĕлернĕ.

Гитлерăвĕцсем влаçа илеччен малтан та вĕсен Германи халăхне хирĕç туса пыракан ирсĕр ĕçĕсене тата преступленийĕсене Осецкий тăрă шыв çине кăларса пынă. Германи фашисĕсем влаçа хăйсем аллине илсен хăйсен тахçанхи тăшманне — Осецкине вĕлересшĕн тăрăшнă. Осецкий пилĕк çул хушши пĕрмайах Гестапо аллинче тыткăнра пурăннă. Тĕнчери обшчествĕннăçрен Осецкий ăçтине пытарса, Гестапо ăна пĕр концентрацилĕ лагĕртен тепĕр лагĕре илсе çӳренĕ, унтан мăшкăланă, асаплантарнă, нимĕнле медицинă пулăшăвĕ те паман. (ТАСС).

Китайри вăрçă

Англи хаçачĕсем Шаңдун провинцинче (Çурçĕр Китай) Китай çарĕсем пысăк çĕнтерӳ туни çинчен пĕлтереççĕ. Китай çарĕсем кунта Йапони фрончĕн линине татса кĕрсе, 160 километр чухлĕ участкăра наступлени туса пыраççĕ. Йапони çарĕ чакса пырать.

Вăтам Китайра Китай çарĕсем Нанкин — Ханчжоу районĕнче вăйлă наступлени туса пыраççĕ. Партизансен отрйачĕсем, Данту хулине (Нанкинран кăнтăрала) туртса илнĕ хыççăн, Нанкин патĕнче Йапони çарĕсен позицисем çине атакă туса пыраççĕ.

Майăн 4-мĕшĕнче партизансем Цзйанинчжене йышăннă. Вăл хула Нанкинран вунпĕр километрта. Йапонĕцсен пысăк çухатусем пулса пыраççĕ. (ТАСС.)

а

В. АДОРАТСКИЙ

КАРЛ МАРКС

(Çурални 120 çул тултарнă тĕле)

Аслăран та аслă революционер, пролетариатăн çулпуçĕ тата теоретикĕ Карл Маркс çав тери генилĕ мыслител тата учонăй пулнă. Енгĕльспа пĕрле вăл ăслăлăхлă коммунисăма — рабочи класăн вилĕмсĕр вĕрентĕвне, унăн кĕрешĕвĕнчи хăватлă теорилĕ хĕçпăшалне тунă.

Капиталисăм пуçланса кайнин, пурăннин тата вилессин саккунĕсене Маркс пуçамран малтан уçса палăртнă, капиталисăмран коммунисăма куçма кирлине тата пурнĕрех çавăн пек пулассине вăл ăслăлăх урлă ĕнентерсе панă. Мĕн пур пусмăрта пурăнакансен тата експлоатациленекенсен çулпуçĕн — пролетариатăн — пĕтĕм тĕпчипе историлĕ аслă задачипе — капиталисăма аркатулăн çапăç тата коммунисăмлă обшчĕствă тăвас задачăна Маркс чи малтан лартнă.

Маркс Енгĕльспа пĕрле пролетариатăн малти отрйадне — коммунисла партине чи малтан организациленекенни тата унăн çулпуçĕ пулнă.

Карл Маркс 1818 çулхи майăн 5-мĕшĕнче Трир хулинче (Рейн таврашĕнчи Прусси) çуралнă. Кунта вăл гимназирен вĕренсе тухнă, малтан Бонн хулинче, унтан Берлинра университета кĕнĕ, йуридически ăслăлăхсене вĕреннĕ, анчах пуринчен ытла историпе философине ытларах вĕреннĕ. Маркс çамрăклах Волтер, Руссо, енциклопедиссен произведенийĕсемпе палланнă, вăл произведенисем унăн идейăлă аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Студент чухне Маркс Гегĕлĕн тата унăн шкулĕн мĕн пур произведенийĕсене тарăннăн вĕреннĕ тата сулахай гегĕлйанĕсен кружокĕ çумне пĕрлешнĕ, сулахай гегĕлйанĕсем тесе Гегĕлĕн, — Ленин çырнă пек, — „Гегĕл философинчен атеисла тата революцилĕ вывăдсем тума тăрăшнă"¹), ученикĕсене каланă. Çав сулахайсемех ĕнтĕ Маркс хăйĕн философилĕ вĕренĕвĕн пысăкĕшне, хăйĕн чаплă вичкĕн ăсĕпе, хăй шухăшланин тарăнăшĕпе тĕлĕнтернĕ.

1841 çулта Маркс, Епикур философийĕ йатлă темăпа диссертацине хÿтĕлесе, университетран вĕренсе тухнă.

Университетран вĕренсе тухнă хыççăн, преподавател пулса ĕçлеме хатĕрленсе, Маркс Бонн хулине пурăнма куçнă. Анчах та правителствăн реакцилĕ политики Маркса учонăй карйерăран пăрăнма ирĕксĕрленĕ. Маркс журналис пулса тăнă. Вăл „Рейнская газета" йатлă прогрессивлă органта ĕçлеме пуçланă, çав орган Кельн хулинче 1842 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен тухса тăма тытăннă, ăна сулахай гегĕлйанĕсем йертсе пынă. Маркс çав хасат çинче политикăлă тата економикăлă ыйтусем тăрăх чаплă статйисем чылай пичетлесе кăларнă. Хасат ĕçĕ Маркса вăл политикăлă економине [illegible] палланине кăтартса пачĕ, вара вăл çине тăрса историпе политикăлă економипе вĕренме пуçланă.

1843 çулта Маркс авланнă, вăл ача чухне пĕрле тусла пурăннă Женни фон Вестфален йатлă хĕре качча илнĕ, вара часах йут çĕршыва пурăнма кайнă. Маркс арăмĕ унăн пурнăçĕнче шанчăклă тус, унăн ĕçĕнче пулăшакан пулнă.

1843 çултан пуçласа 1844 çула çитиччен Маркс Парижре пурăннă, 1845 çултан 1848 çул пуçламăшне çитиччен Брюссельре пурăннă. Маркспа Енгĕльс 1844 çулта çентябрьте Парижре тĕл пулнă, хыççăн [illegible] пуçласа кайнă. Маркспа Енгĕльс ун чухне Парижри революцилле ушкăнсен вĕресе тăракан пурнăçне чи хĕрÿллĕн хутшăнса ĕçленĕ. Маркспа Енгĕльс хушшинче шухăшсемпе ĕмĕтсен пĕрлехĕхле çирĕпленнĕ, çав пĕрлехĕхле ĕнтĕ вĕсен çыхăнуне пĕтĕм пурнăç тăршшĕпех никам уйăраймин туна.

Маркс Енгĕльспа пĕрле ăслăлăхлă коммунисăмăн теорине тунă. Маркспа Енгĕльс йертсе пынипе 1847 çулта „Коммунисссен союçĕ" шăнса тухнă, çак вăл пуçласа коммунисла партине организацилени пулнă. Çав çул Маркспа Енгĕльс „Коммунисссен союçĕн" II-мĕш конгресĕ хушнă тăрăх, етемлĕх историнче асăран та асăл документне „Коммунисла Партин Манифестне" тунă. „Ку произведенире, — тесе çырнă Ленин, — генилĕ уççăн та пит те витĕмлĕн, пит те [illegible] самахсемпе сÿхсăнтарса — [illegible] çĕнĕ тĕнче шухăшĕ [illegible] ... аталанăвăн çинчен, класс кĕрешĕвĕн ... çинчен теори ... пролетариатăн, çĕнĕ коммунисăмлă обшчĕствă тăвакан, пĕтĕм тĕнчипе историлĕ революцилле рольне сутатса панă"²).

1848 çулхи февраль революцийĕ сарăлса кайсан, Белгирен кăларса йанă Маркс, хăшпĕр вăхăтласа Парижре [illegible], унта Кельн хулине (Германи) пынă. Унта 1848 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа „Новая рейнская газета" йатлă хасат тухнă, унăн тĕп редакторĕ Маркс пулнă. Ку вăл революцилле пролетариатăн пĕрремĕш хасачĕ пулнă. Маркс Германири тĕрлĕрен классен рольне тата политикине тем çине йĕркелĕн çутатса пынă [illegible] ... çавăн пекех тата вакбуржуаллă демократин йĕркелĕ мар, тĕрекĕр политикине тăрă шыв çине кăларнă.

„Новая рейнская газета" хасат 1849 çулхи майăн 19-мĕшĕнчен тухса тăнă. Çакăнчен темиçе кун малтан Маркса Германирен кăларса йанă. Вăл малтан Парижe тухса кайнă, унтан Лондăна пынă, кунта вара виличченех пурăннă.

Политикăлă емигрант пулса Лондăна пурăнма куçса, Маркс капиталисăмлă стройа вĕренес тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕçе тытăннă. Ăна пит йăвăр материаллă условисенче ĕçлеме тивнĕ. Нушалă пурнăç Маркса пăвса вĕлерессипе пĕр хутчен мар хăратнă тата унăн çемйин членĕсене высăпа вĕлерессипе хăратнă. Енгĕльс йалапах материаллă пулăшу парса тăни çеç Маркса „Капитал" çырас пысăк ĕçе вĕçне çитерме май панă.

Маркса калама çук йăвăр ĕç туса пыма тивни унăн сывлăхне хавшатнă. Кăнтăрла вăл ĕçукçи тăвас тесе ĕçленĕ, каçсерен — „Капитал" алçырăвĕпе ларнă. Çĕрлехи тимлĕ ĕç чирлеттерсе йанă, çав чир Маркса йăчарлатнă, ăна ĕçлеме капсĕрленĕ.

Маркс пихăçан та кабинетра ларакан учонăй пулман. Вăл йалапах ăслăлăх ĕçне активлă практикăлă ĕçпе сыхăнтарса пынă. Çав вăхăтрах ăна нумай йышлă тăшмансемпе çапăçма тивнĕ, çав тăшмансем хăйсен хăравçине тата революцилĕ кĕрешÿ ĕçне сутнине ним хĕрхенмесĕр критикленĕшĕн ăна йĕрленĕ.

1848 çулхи революцийĕ путарнă хыççăн пуçланса кайнă хайар реакци çулĕсенче Маркс рабочи класри революцилĕ вăйхăватăн çĕнĕ çĕкленевĕшĕн кĕрешме чарăнман, буржуаллă демагогсен ирсĕрне тата Англири либераллă государствă деятелĕсен суйине тăрă шыв çине кăларма чарăнман.

60-мĕш çулсенче Европăра рабочи йухăмĕн çĕнĕ çĕкленĕвĕ пуçланнă. 1864 çулта Маркс тÿрремĕнех йертсе пынипе пĕрремĕш массăллă пролетарилĕ партий „Рабочисен пĕтĕм тĕнчери йулташлăхĕ" — Пĕрремĕш Интернационал пуçланса кайнă. Маркс çак организацин чунĕ, унăн тĕп руководителĕ, унăн чи кирлĕ документсен — резолюцисен, заявленисен, манифестсен — автăрĕ пулнă.

„Тĕрлĕ çĕршывсенчи рабочисен йухăмне пĕрлештересе пырса, пролетарилĕ мар, Марксчченхи социалисăмăн тĕрлĕ формисене (Маццини, Прудон, Бакунин, Англири либераллă тред-йунионисăм, Германире Лассалле сылтăмала сулăннисене тата ыт.) пĕр ĕмĕтлĕ пулса ĕçлес çулпа йама тăрăшса, пур çав сектăсемпе шкулсен теорийĕсемпе кĕрешсе пырса, Маркс тĕрлĕ çĕршывсенчи рабочи класăн пролетарилĕ кĕрешĕвĕн пĕрлехлĕ тактикине туптаса туса панă"³) — çав тапхăрта Маркс тунă ĕçе Ленин çапла хаклат ĕнтĕ.

1867 çулхи апрел уйăхĕнче Маркс „Капиталăн" пĕрремĕш томĕн алçырăвне пичете панă, çак вăл асăран та аслă ĕç, унта капиталисăмлă обшчĕствăн саккунĕсене ăслăлăх тĕпĕнчен тĕпчесе тăрăн сăнласа ăнлантарса панă. Çак чаплă кĕнекене çырнă чухне Маркс çав тери пысăк вăй-хал хунă, тăмĕр пек чăтăмлă пулнă, ытла шутсăр тимлĕн ĕçлеме пултарнине кăтартнă. Çав кĕнекеччен вăл хăйĕн сывлăхне, пурнăçне, интересĕсене, çемйе интересĕсене уйăса таман.

„Капиталăн" пĕрремĕш томĕ 1867 çулхи çентябрь уйăхĕнче пичетленсе тухнă.

Сакăн хыççăн темиçе çултан рабочи клас кĕрешĕвĕн историйĕнче пысăкран та пысăк событи пулса иртнĕ — историре пуçласа Париж пролетариачĕ влаçа хăйĕн аллине илнĕ. Пĕтĕмпе те 72 кун çес пурăннă — 1871 çулхи мартăн 18-мĕшĕнчен пуçласа майăн 28-мĕшне çитиччен пурăннă — Париж Коммунĕ пролетариатăн асăран та аслă хăйуллă ĕçĕ пулнă. Маркс Коммуна хăйĕн аллине мĕнле хатĕрсем пур, Париж Коммунне çавсемпе пулăшу парассине организациленĕ. Вăл Коммунапа йалан çыхăну тытнă, Коммуна правителствин членĕсене хаклă кăтартусем панă, Коммуна сăнанса кайнă хыççăн „Франции гражданская война" йатлă кĕнеке пичетлесе кăларнă (1871 ç.), çав кĕнекере вăл, Коммунăн пĕр йăнăшне те пытармасăр, Париж рабочийĕсем тунă революцилле ĕçĕн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ аслă пахалăхне таткăлă характеристика тата хак панă.

Пролетарилĕ государствăна организацилемелли тĕп пуçламăшсене, Коммуна опычĕ тăрăх Маркс палăртса панă тĕп пуçламăшсене Ленин вăйлатса пынă, конкретизациленĕ, XX-мĕш ĕмĕрти революцисен опычĕнчен илсе çĕнĕ содержанипе пуйанлатнă. Ленин — пролетариат диктатурин государствăллă формине тупнă — вăл совет влаçĕ, ăна пирĕн çĕршывра Ленин — Сталин партийĕ йертсе пынипе çĕнтерсе илнĕ.

Пĕрремĕш Интернационал пурăнма пăрахсан, Маркспа Енгĕльс малтанхи пекех тĕрлĕ çĕршывсенчи рабочийĕн революцилле пурнăçне йертсе тăракан тĕп центр пулнă, Францири, Германири, Романски çĕршывсенчи, Скандинави çĕршывĕсенчи, Америкăри, Россири рабочи пуçарăвĕсен руководителĕсем вĕсенчен канаш илнĕ.

Мĕн пур çĕршывсенчи рабочисен йухăмне тĕплĕн сăнаса пырса, Маркс Германи çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхнă, унта 1869 çултан пуçласа социал-демократилле парти организациленĕ. Ун чухне партине Август Бебельпе Вильгельм Либкнехт йертсе пынă, вĕсем Маркс вĕрентĕвне хăйсен йалавĕ туса суйласа илнĕ. Анчах та, Германири социал-демократин практикăлă ĕçĕнче вакбуржуаллă, демократи çулпуçĕсен примиренчĕствипе соглашателлĕ йăнăшсем нумай пулнă.

Маркспа Енгĕльсăн Германири социал-соглашателствине пĕр хут мар критиклеме тивнĕ. Пролетариат диктатури çинчен тăракан ыйтăва Марксăн уйрăмах тĕрĕс ăнлантарса пама тивнĕ. Маркс пролетариат диктатурине „хăйсене хирĕç тăракан кивĕ тĕнче сийĕсем çинче рабочисем **класлă пуçпулни**" тесе палăртат. Çав класлă пуçпулни — тесе калат Маркс, — классем пурăннин економикăлă пикĕсĕсене илсе антаричченех тăсăлса çырат. Революцилĕ кĕрешÿсĕр, революцилĕ ирĕксĕрлемесĕр классене пĕтерме пулмаст.

Пролетариатăн гегемонийĕ тата диктатури çинчен вĕрентнипе кăларса тăратса, Маркс çав вăхăтрах — пролетариат хресчен массисен çулпуçĕ пулса тăрат, тесе ăнлантарса панă. Маркс çапла вĕрентнĕ: пролетариатăн государствă влаçне хăйĕн аллине йарса илсе, хресченсен пурнăçне йусас тĕлĕшпе ĕçсем туса ирттермеле тата çапла тунипе ăна революцийе çавăрмала. Вакă уйрăм йалхуçалăхĕнчен шултра обшчĕствăлă йалхуçалăхне хресченсем çăмăллăнах куçма пултарччăр тесен, çав ĕçсенче уйрăм харпăрлăхран коллективлă харпăрлăх патне куçмалли пуçламăшне пулмала.

Маркс палăртса панă çак политикăна Ленин тата унăн ĕçне генилĕ туса пыракан Сталин йулташ конкретизациленĕ, вăйлатса пынă тата пурнăçа кĕртнĕ. Ленин — Сталин партийĕ çак политикăна пурнăçа кĕртсе пырса, шултра коллективлă çĕрĕçĕ ССР Сойузĕнче чаплăн çĕнтерме турĕ.

Хăйĕн пурнăçĕн йулашки кунĕсем патне çитиччченех Маркс мĕн пур çĕршывсенчи рабочисен йухăмне йертсе пынă, çав вăхăтрах калама çук пысăк ăслăлăхлă ĕçе ырми-канми туса пынă. 1869 çулăн вĕçĕнче Маркс 51 çулта чухне, вăл вырăс чĕлхине вĕренме тытăннă, ăна виçĕ уйăх хушшинчех вĕренсе çитнĕ те, вырăс економики çинчен çырнă пичекесене хăй тĕллĕнех вулама пултарнă. Маркс Российăри аграрлă ыйтăва вĕреннĕ. Революци пулма хатĕрленсе çитекен çĕршыв пулнă май, Российă ăна пур йенчен те интереслентернĕ. Российăра революци çĕнтерни тĕнче революцийĕн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрассине Маркс малтанах курнă.

1881 çулхи декабĕрĕн 2-мĕшĕнче Марксăн арăмĕ вилнĕ, 1883 çулта йанвар уйăхĕнче унăн йуратнă аслă хĕрĕ вилнĕ; тепĕр икĕ уйăхран, çав çулхи мартăн 14-мĕшĕнче Маркс, хăйĕн кресли çинче ĕмĕрлĕхех лăпкăн сывăрса кайса вилнĕ. Ăна Лондăнра Хайгейт çави çине хăйĕн арăмĕпе тата шанчăклă служанкипе, çемйе членĕ пекех пулнă Йелена Демутпа, пĕрле пытарнă.

***

Маркс вилнĕренпе 55 çул ытла иртрĕ. Маркс вĕрентĕвне пăсас тесе, унăн сăнарне пăсса пĕтерес тесе, унăн пурнăçĕпе личнăçне суйса кăтартас тесе буржуазине унăн тарçисем сахал мар вăй хучĕç. Пирĕн вăхăтра „марксисăма çавăн çине пытараканĕсен" ролĕне фашиссем хăйсем çине илчĕç. „Марксисăма çавăн çине пытарма" çакăн пек кулăшла хăтланнисем пирки Сталин йулташ ПСК(б)П XVII-мĕш сйесĕнче çапла каланă:

„Хĕвеланăçĕнче, хăшпĕр государствăсенче, марксисăма пĕтернĕ тесе калаççĕ. Ăна фашисăм текен буржуаллă националисăмлă йухăм пĕтернĕ тесе калаççĕ. Çак паллăх, пустуй йапала. Историйе пĕлмен çынсем анчах çапла калаçма пултараççĕ. Марксисăм вăл — рабочи класăн тĕп интересĕсене ăслăлăх урлă тĕрĕс кăтартса пани пулат. Марксисăма пĕтерес тесен, рабочи класа пĕтерес пулат. Анчах рабочи класа пĕтерме çук. Марксисăм çапăçу çулĕ çине тухнăранпа 80 çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Çак вăхăтра темиçе вуншар, çĕршер буржуаллă правителствăсем марксисăма пĕтерме хăтланса пăхрĕç. Мĕн пулчĕ-ха вара? Буржуаллă правителствăсем килнĕ те, кайнă та, анчах марксисăм çаплах йулнă. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ)**. Кунтан та ытларах, — марксисăм çĕр чăмăрĕн ултăмĕш пайĕнче пĕтĕмпех çĕнтерчĕ, çитменнине çак марксисăм çĕнтерĕвĕ ĕлĕк марксисăма ĕмĕрлĕхех пĕтерçе хунă тесе шутланă çĕршывра пулчĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ)**"⁴).

Ленинпа Сталин йертсе пынипе Российăри пролетариат Маркспа Енгĕльс хушса хăварнисене пурнăçа кĕртрĕ: вăл влаç кĕрешсе çĕнтерсе илчĕ, хăйĕн диктатурине туса хучĕ, тĕпрен илсен социалисăм — коммунисăмăн пĕррремĕш фазине туса çитерчĕ, хăватлă социалисăмлă государствă турĕ.

Ленинла-Сталинла Тĕп Комитет йертсе пыракан аслă коммунисла парти Советсен çĕршывне пĕр çĕнтерÿрен тепĕр çĕнтерÿ патне илсе пырат. Мĕне пула парти çакăн пек ăнăçусем тунă? „Вăл, — тенĕ Сталин йулташ партин XVII-мĕш сйесĕнче, — марксла парти, ленинла парти пулса тăнине пула. Вăл хăйĕн ĕçĕнче Маркс, Енгĕльс, Ленин вĕрентĕвĕ тăрăх ĕçлесе пынине пула. Çак вĕрентĕве пурнăçа кĕртсе пырсан, çак компаса хамăр алăра тытса пырсан, епĕр хамăр ĕçре çитĕнÿсем туса пырасси пирки нимĕн иккĕленмели те пулма пултараймаст"⁵).

Маркспа Енгĕльсăн, Ленинпа Сталинăн идейисем Советсен аслă çĕршывĕнче чаплăн пурнăçа кĕчĕç. Вăл идейăсем пĕтĕм тĕнчипе çĕнтерсе илĕç.

¹) В. И. Ленин. Сочинения. Том XVIII. Стр. 5.
²) Савăнтах. Стр. 6.
³) В. И. Ленин. Савăнтах. Стр. 7.
⁴) И. Сталин. Вопросы ленинизма. Стр. 597.
⁵) Савăнтах.

Ф. ЛЕССНЕР

Маркса аса илнисенчен

Фридрих Лесснер — Маркспа Енгĕльс тавра „Коммунисссен союçне" пĕрлешнĕ пролетарилĕ революционерсен пĕчĕк ушкăнĕн представителĕ. Çав ушкăн 1848—1849 çулсенче Маркс йертсе пынипе вирлĕ шкул витĕр тухнă, кайарахпа, 1-мĕш Интернационал вăхăтĕнче Маркса тата унăн йалавне пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçленĕ.

Епĕр Ф. Лесснер К. Маркса аса илнисенчен илсе пичетлетпĕр (вĕсене 1938 çулта тухнă „Исторический журнал"-ăн 2-мĕш № тĕплĕнрех пичетлесе кăларнă). Ф. Лесснер К. Маркс çинчен аса илнисене, уйрăм сыпăксемсĕр пуçне, халиччен вырăсла пичетлесе кăларман.

... 1847 çулти нойабĕр пĕтнĕ тĕле „Коммунисссен союçĕн" иккĕмĕш конгресĕ пулса иртрĕ. Унта Карл Маркс та пулнă. Маркспа Енгĕльс конгреса кучухнехи социалисăм принципĕсене хÿтĕлеме пынă. Контрес вунă кун хушши ĕçлерĕ.

Ларусене делегатсем çеç хутшăннă. Епĕ делегат пулман. Анчах епĕр мĕн çинчен сăмах пынине пĕлнĕ, çавăнпа та пренисем мĕнпе пĕтессине шутсăр хытă кĕтнĕ. Конгрес Маркспа Енгĕльс каласа панă принципсем майлă пĕр шухăшлăн тăнине тата вĕсене „Манифест" çырса хатĕрлеме хушнине часах илтсе пĕлтĕмĕр. Унтан, 1848 çул пуçламăшĕнче, Лондăнран „Коммунисла манифесăн" алçырăвĕ çитсен, çав самана пултарнă документа пичетлесе кăларас ĕçе епĕ те кăштах хутшăнтăм: алçырăвне типографине леçсе патăм, типографирен Карл Шаппера корректура вулама оттиск илсе килсе патăм.

Çавăн чухне епĕ Маркспа Енгĕльса малтанхи хут тĕл пулса куртăм. Епĕ ăна нихăçан та манас çук.

. . . .

„Коммунисла манифес" пичетрен 1848 çулти феврал уйăхĕнче тухрĕ. Епĕр ăна Парижри феврал революцийĕн хыпарĕпе пĕрле илтĕмĕр.

Çав хыпар пирĕн кăмăла çĕклентерсе йани çинчен каласа пама сăмахăм та çитес çук. Пире калама çук пысăк савăнăç çавăрса илчĕ. Пире пĕр шухăш кăмăл çавăрса илчĕ: етемлĕхе ирĕке кăларас ĕç шĕн пурне те пама хатĕр! тĕнĕ шухăш.

. . . .

... 1848 çулта çулла епĕ Кельн хулине çитрĕм. Çав хула манăн чунăма уйрăмах хытă туртаччĕ. Мĕншĕн тесен унта революцишĕн ĕçлекен çынсем пурăннă. Маркс, Енгĕльс, Вильгельм Волф, Фрейлиграт, Шаппер, Молль çав вăхăтра Кельнра пурăннă, унтах „Новая рейнская газета" тухса тăнă.

... 1848 çулти нойабĕр уйăхĕнче „Демократилĕ сойузăн" пухăвĕ пулчĕ. Çав пухура Маркс çар полевой сучĕ йышăннă приговор тăрăх Венăра Роберт Блюма персе вĕлерни çинчен пĕлтерчĕ. Залра шăп пулчĕ. Маркс трибуна çине хăпарса тăчĕ те, Блюм вилĕмĕ çинчен пĕлтерекен телеграмма вуласа пачĕ. Епĕр малтан çилĕ тулса килнипе шаках хытса кайрăмăр. Унтан залра чăн-чăн çилтăвăл пуçланса кайрĕ. Пĕтĕм нимĕç халăхĕ революцийе вĕçлесе çитерме пĕр çын пек харăс сиксе тăрассăн туйăначчĕ. Епĕ те, епĕр пурсăмăр та йăнăшрăмăр. Пурте йалтах урăхла килсе тухрĕ: бургомистрсем халăхăн чи лайăх ывăлĕсене вĕлерме хушнă тирансен аллисене чуптума тапратрĕç.

Реакци вăй илсе пыни нимрен малтан оппозицилĕ пичете, уйрăмах „Новая рейнская газета", ирĕклĕхпе правăна çирĕп те хăйуллăн хÿтĕлекен хаçата, хĕснинче палăрчĕ. 1849 çулти февралĕн 7-мĕшĕнче „Новая рейнская газета" редакторĕсен малтанхи процесĕ пулчĕ. Тепĕр кунне иккĕмĕш процес пулчĕ. Йулашкинчен вара, 1849 çулти майăн 18-мĕшĕнче хаçата пачах хупса лартрĕç.

Çав процессенче Маркс хăйне хÿтĕлемен, министерствăна айăпланă. Хаçатăн аслă редакторĕ пулнă Маркса, çавăн пекех тата Енгĕльса, „Новая рейнская газета" пичетлĕсе кăларнă статйара „хăйсен службă ĕçĕсене тунă прокурора тата жандармсене кÿрентернĕ", тесе айăпланă. Суд пынă залра пĕр пушă выран та пулман. Оберпрокурорпа адвокатсем сăмах каланă хыççăн Маркс сăмах илчĕ[1]). Вăл пĕр сехете йахăн каларĕ; унăн тĕп шухăшĕсем лăпкăн, витĕмлĕн, хăватлăн йанăраса тă-

Трир хулинчи çурт. Ку çуртра Карл Маркс çуралнă
(Сойузфото).

чĕç; çав шухăшсем оберпрокурора, ун урлă пĕтĕм кивĕ йĕркене, Пруççири ирсĕр бÿрократийе, кивĕ çара, кивĕ суда, кивĕ судйасене, самодержави вăхăтĕнче çуралса ÿснĕ, вĕреннĕ, самодержави службинче кăвакарса шуралнă судйасене, çунтарнă çемĕн вайлăрах çунтарчĕç.

Тепĕр темиçе уйăхран Маркса Пруççирен кăларса йачĕç. Енгĕльс Бадена тухса кайрĕ. Çав вăхăтра Кельн хулине тăрса йулнă йулташсем йалта агитаци ĕçне сарса йачĕç. Хресченсем хушшинче агитаци мĕнле вырăн йышăнса тăнине епĕр лайăх пĕлнĕ.

. . . .

Епĕ Маркс патне час-часах çÿреттĕмчĕ[2]). Маркс килĕ шанма тивĕç йулташшăн кашнинĕшĕнех уçă пулнă. Епĕ, ытти чылай йулташсем пекех, Маркс патĕнче иртернĕ самантсем нихăçан та асăмран кайас çук. Унта пуринчен ытла Маркс арăмĕ çут хĕвел пек йалкăшаччĕ. Вăл йаштака, пит те илемлĕ, çав хÿшăрах калама çук кăмăллă, калаçма йуратакан, хăйне хăй мăнна хуман хĕрарăм пулнă. Ун обшчĕствинче килти тăван анне йе тăван аппа патĕнче ларнă пекех туйăначчĕ. Вăл рабочи йухăм ĕçне пĕтĕм чунтан-вартан кăмăллаччĕ. Буржуазине хирĕç кĕрешес ĕçри чи пĕчĕк çитĕнÿ те ăна шутсăр хытă савăнтараччĕ.

Маркс рабочисемпе тĕл пулса калаçассине пит те пысăк вырăна хунă. Куç умĕнче йăпăлтатмасăр тÿррĕн, пĕтĕм ăшран калаçакан çынсемпе тĕл пулма тăрăшнă вăл. Йухăм çинчен рабочисен шухăшне илтсе пĕлессине вăл питĕ паха ĕç вырăнне хурса шутланă. Вăл вĕсемпе пĕрле политикăлă йе економикăлă пысăк ыйтусене сÿтсе-йавма йаланах хатĕр пулнă. Çавăнпа пĕрлех вăл рабочисем çав ыйтусене хăш таран ăнланса илнине хăвăрт пахалама пултарнă. Рабочисем мĕн чухлĕ ытларах ăнланнă, Маркс çавăн чухлĕ ытларах савăннă.

Интернационал вăхăтĕнче вăл Генералнăй совет ларăвĕнчен пĕринчен те йулман. Лару хыççăн епĕр, урăхла каласан, Маркс тата Совет членĕсем нумайĕшĕ, сăра курки умĕнче ирĕкре калаçас майпа пĕр-пĕр тавернăна кайса ларатăмăр. Киле таврăннă чух Маркс час-часах йĕркелĕ ĕçкунĕ çинчен, уйрăмах „сакăр сехетлĕ ĕçкунĕ" çинчен калаçаччĕ. Маркс час-часах çапла калаччĕ: „епĕр сакăр сехетлĕ ĕçкунĕшĕн кĕрешетпĕр, анчах епĕр хамăр талăкра час-часах икĕ хут ытларах ĕçлетпĕр".

Чăн та, Маркс питĕ нумай ĕçленĕ. Пĕр Интернационал кăна çав тери нумай вăй илнĕ, ăна вальли çав тери нумай вăхăт кирлĕ пулнă! Çав ĕçе хутшăнса курман çын тавçăрса та илейрес çук. Çавăнпа пĕрлех Марксăн пурăнмалăх ĕçлемеле пулнă, економикăпа историлĕ ĕçĕсене валли Британи музейĕнче темĕн чухлĕ материал пухмала пулнă.

Музейран киле, Лондăнăн çурçĕр пайĕнчи Майтланд парк роада, Гаверсток Хилл урамне, таврăннă чух вăл Интернационала пырса тĕкĕнекен ыйтусем çинчен калаçма ман патăма кĕрсе тухаччĕ (епĕ музейран инçе мар пурăнаттăм). Киле пырсан вăл апат çырткаланă, кăштах каннă, унтан каллех ĕçе тытăннă. Час-часах сĕм-çĕрлеччен йе ирччĕнех те ĕçленĕ; кăшт каннă вăхăтра та ун патне партири йулташĕсем пырса çÿренĕ.

Маркс та, ытти чăн-чăн аслă çынсем пекех, хăйне хăй мăнна хуман. Епĕ паçăр каланă пек, вăл йаланах рабочи йухăм çинчен ахаль рабочисен шухăшĕсене илтсе пĕлме тăрăшнă. Çапла, вăл кăнтăрлахи апат хыççăн час-часах ман патăма кĕречче, тĕрлĕ ыйтусем çинчен калаçма мана уçăлса çÿреме чĕнетчĕ. Епĕ ăна, паллах, калаçма ирĕк панă, мĕншĕн тесен унăн шухăшĕсене сăнасси маншăн чăн-чăн савăнăç пулнă. Епĕ калаçусăр пуçне урăх ним çинчен те шухăшламан. Киле кайма вăхăт çитсен, Маркспа ытла та уйăрлас килмесчĕ.

Вăл çынпа питĕ лайăх калаçаччĕ. Хăй патне çÿренĕ çынсен кăмăлне хăй йенне туртаччĕ, хăй йеннеле çавраччĕ. Хăйпе пĕрле ыттисене те култарма пултараччĕ. Хамăрăн йулташсем кирек те ăçта çĕнтерÿ тусан та, Маркс вĕçи-хĕррисĕр савăначчĕ, хăйне сывăх тăракансене пурне те савăнтараччĕ.

Марксăн хĕрĕсем виççĕш те çамрăклах рабочи йухăмпа интересленнĕ. Маркс кил-йышĕнче рабочи йухăм йаланах тĕп калаçу пулнă. Маркспа хĕрĕсем хушшинчи хутшăну чи кăмăллă, чи ирĕклĕ хутшăну пулнă. Хĕрĕсем ашшĕ çине часрах пиччĕшĕ йе йулташĕ çине пăхнă пек пăхнă, мĕншĕн тесен Маркс хăйне питĕ простă тыткаланă. Кирлĕ вăхăтра вăл ачисене канаш паракан пулнă; вăхăт пур чухне вĕсемпе вăйă выляканн йулташ пулнă.

Маркс ачасене калама çук хытă йуратнă. Хулара нимĕн те туман чухне вăл уçăлса çÿреме Хемстед сăрчĕсем çине кайса çÿренĕ. „Капитал" автăрĕ час-часах урамри ачасемпе пĕрле аппаланнă.

1882 çулта йалтах амăшне хывнă аслă хĕрĕ вилнĕ. Çакă вăл Марксшăн йăвăр вăхăтра ăна хытă авса хуçнă. Унччен çулталăк маларах, 1881 çулти декабĕрĕн 2-мĕшĕнче, Марксăн арăмĕ вилнĕ.

Маркс вăл вăхăтра ĕслĕкпе хытă аптăранă. Вăл ĕсĕрнине илтсен, çав сарлака хулпуççилĕ, хурçă пек çирĕп çын тĕпренсе кайассăнах туйăначчĕ. Йаланах ĕшенеймен ĕçленĕ пирки унăн сывлăхĕ тахçанах хавшанă пулнă. Çавна май ĕслĕк ăна пушшех те хытă аптратнă.

70-мĕш çулсен вăтаçĕрĕнчех врач ăна чĕлĕм туртма чарнă. Маркс шутсăр хытă туртнă, чĕлĕм туртма пăрахасси уншăн тем пекех йăвăррăн туйăннă. Чĕлĕм туртма чарнă хыççăн малтанхи хут ун патне пырсан, вăл мана савăнăçлăн çапла каларĕ: темиçе кун ĕнтĕ чĕлĕм туртмастăп, врач ирĕк памасăр туртас та çук, терĕ. Ун патне пырса кĕрсен кашнинчех вăл: чĕлĕм туртма пăрахни çавăн чухлĕ вăхăт çитрĕ ĕнтĕ, çав хушăра туртасси çинчен пĕрре те шухăшламан, тесе пĕлтеречче. Çавна тума пултарнипе ăна хăйне те тĕлĕнмеле пек туйăначчĕ. Кайарахпа врач ăна кунне пĕрер çигарă туртма ирĕк парсан, вăл пушшех хĕпĕртесе ÿкрĕ.

1883 çулти мартăн 15-мĕшĕнче епĕ çапла çыру илтĕм:

„Лондăн, 1883 ç. мартăн 15-мĕшĕ.

Хаклă Лесснер!

Пирĕн ватă Маркс ĕнер 3 сехетре лăпкăн ĕмĕрлĕхех çывăрса кайрĕ. Ашра йун кайнăран вилчĕ пулмала.

Шăматкун 12 сехетре пытараççĕ. Тусси[3]) сана пытарнă çĕрте пулма ыйтат. Питĕ васкатăп.

Санăн Ф. Енгĕльс".

Çав хăрушă хыпар мана пĕтĕм ăшран силлесе илчĕ. Маркспа çывăх пулнă çынсем унăн вилĕмĕпе пĕрле рабочи йухăм мĕн тери нумай çухатнине лайăх пĕлеççĕ. Рабочи йухăм пысăк аслă тата пур те пĕлекен çынна çеç мар, хурçă пек çирĕп характерлĕ çынна та çухатрĕ. Хăйпе пĕрле шăтăка мĕн чухлĕ пĕлÿ илсе кайнине унăн ĕçĕсем питĕ лайăх кăтартса пафаççĕ. Калас пулат, çав ĕçсенче Маркс çырма палăртса хунин вуннăмĕш пайĕ те çук. Хăйне хăй шеллемесĕр кĕрешнĕ пĕтĕм пурнăçĕ унăн паттăр характерĕ çинчен калаçа парат!

Рабочисен массисем ăна çав çавах ăнланса илессине, буржуаллă обшчĕствăна сирпĕтсе антарма пулăшас майпа вĕсем унăн вĕрентÿвĕнчен вăй илсе тăрассине тата пĕтĕмпе тăна илсе çĕнĕ обшчĕствă тăвас тĕлĕшпе ĕçлессине Маркс çирĕп ĕненсе тăнă.

Маркс йăнăшман!..

1) Лесснер „Новая рейнская газета" хаçатăн малтанхи процесне асра тытса калат — Ред.

2) Ф. Лесснер асăнлăвĕсен çак пайĕ 1856 çула тата унтан кайарахри вăхăта пырса тивет.

3) Маркс хĕрĕ, Елеонора — Ред.

Ĕçе тытăннă

ШАХАСАН. Çĕнĕ Пинерти колхоз çулйĕр строителствинче ĕçлеме пуçларĕ. Çулйĕр ĕçĕнче ĕçлеме уйăрнă колхозниксем кирлĕ таран хăйăр турттарса хатĕрлерĕç. Халĕ чул турттараççĕ, хăшĕсем кĕпер тăваççĕ.

Колхоз çулйĕр ĕçĕнче ĕçлеме хатĕрлекен районри бригадирсен курсне 4 çынна вĕренме йачĕ.

В. Лукин.

Çĕнĕ кĕпер турĕç

ВĂРМАР. Чечейкасси йалĕ витĕр Енĕш шывĕ йухса выртат. Кăçал пăр кайнă вăхăтра çурхи шыв кĕпере çĕмĕрсе пăрахрĕ. Йал çыннисем пăр кайса пĕтсенех, çĕнĕ кĕпер тума тытăнчĕç. Халĕ ĕнтĕ кĕпере туса пĕтернĕ. Вăл çирĕп, илемлĕ.

Арк. Скачков.

400 кубла метр хăйăр

ТУТАРКАС. Чемейри „Страж революции" колхоз çулйĕр строителствинче ĕçлеме бригадă организацилерĕ. Бригадăра 10 çын, икĕ лаша.

Пайанхи куна бригадă вырăнти çулсене йусаса тухса, 400 кубла метр хăйăр турттарчĕ. Халĕ чул турттарма пуçларĕç.

Бригадир Верă Федăрăвă йулташ кăçал çулсене лайăх тытса усрама пулат.

Н. Николайĕв.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти органĕсен суйлавĕсене йĕртсе пымала

Республикăри пур районсенче те пуçламĕш организацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем пыраççĕ. Хăшпĕр районсенчи (Куславкка, Йетĕрне) пуçламĕш парторганизацисенче отчотпа суйлав кампанине вĕçленĕ те ĕнтĕ. Отчотпа суйлав пухăвĕсем активлă иртеççĕ. Шупашкарти тата районсенчи чылай пуçламĕш парторганизацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсене коммунистсем 100 проц. пыраççĕ.

Пур пухусенче те пекех, партком секретарĕсен, парторгсен отчочĕсем тăрăх, пренире тухса калакан коммунистсем парторганизацисен ĕçне хытă критиклерĕç, партилĕ-политикăлă тата хуçалăх ĕçĕсене малашне пур майсемпе те лайăхлатса пыма сĕнӳсем параççĕ. Çакă вăл парти массисем ӳснине, вĕсем хăйсен руководителĕсенчен лайăхрах ĕçлеме ыйтнине тата коммунистсен большевикла сыхăлăхĕ хăпарнине кăтартать. Халăх тăшманĕсемпе кĕрешсе пырас ĕçе вăйсăрлатнă, çамрăк кадрсене ĕçе лартас тĕлĕшпе, вĕсене ĕçре пулăшса пырас йĕнĕпе çитекĕксĕр ĕçлене руководителсене коммунистсем уйрăмăнах хытă критиклеççĕ. Чăвашсойузри коммунистсем Çергейев йулташа парторга суйламан, мĕншĕн тесен вăл партилĕ политикăлă ĕçе организацилемен, растратăсемпе кĕрешмен. Вăл коммунистсенчен, массăсенчен те татăлса кайнă. Çавăн пекех, Коммунисла йалхуçалăх шкулĕнче партком çекретарĕ пулса ĕçлене Воробйов йулташа та группăри парторгсенчен татăлса кайнăшăн коммунистсем питĕ хытă критикленĕ. Воробйов йулташа парткомăн çĕнĕ составне суйламан. Коммунистсем пур çĕрте те пекех парти руководителĕсем сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерме массăсене мĕнле организацилениине, парторганизаци умĕнче тăракан ĕçсене мĕнле пурнăçланине кура тĕрĕслеççĕ.

Шупашкар районĕнче МТС-ри коммунистсем парторг ĕçне хытă критикленĕ. Шчеголĕв йулташ—парторг—начар ĕçленĕ, тесе йышăннă. Мĕншĕн тесен МТС-ра сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçленĕ. Парторганизацинче политикăла сыхăлăха мăкатнă пирки МТС аппаратне клас тĕлĕшĕнчен йут етемсем кĕрсе кайнă. Трактăрсене йусас ĕçе сăтăрла туса пынă. Йакăвлĕв бухгалтĕр патшалăх укçине ăçта кирлĕ унта салатма тытăннă. МТС работникĕсем Гаврилăв, Николайĕв, Павелин тата ыт. ĕçке йаранна. Николайĕв агронома ним ĕçлемесĕр, ĕçсе çес пурăннăшăн пухура хытă критикленĕ хыççăн, вăл пухуран тухса килне çитсенех пăру пуснă та ĕçме тапратнă. Шчетинин ӳсĕрпе хăйĕн парти билетне çухатнă. Парторганизаци çак ирсĕрлĕхсемпе кĕрешмен. Çав ĕçсем çинчен пухура та сӳтсе йавман. Трактăр бригадисенче партилĕ-политикăлă ĕçе йĕркелемен. Çулталăк хушшинче пĕр çынна та парти ретне илмен.

Коммунистсем парти Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнчи пленумен решенине пурнăçламан парторгсене хытă критиклеççĕ. Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче Çмелов йулташа парти пухăвĕ йышăнна решенисене пурнăçламаншăн парторга суйламан. Кунта парторг пулса ĕçлеме Романăв йулташа суйланă.

Иртнĕ кунсенче пулса иртнĕ отчотпа суйлав пухăвĕсем тата çакна кăтартса параççĕ. ПСК(б)П райкомĕсем тата парти комитечĕсем чылайĕшĕ отчотпа суйлав пухăвĕсене кирлĕ пек йĕртсе пымаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсене хатĕрленмен, пухусем йĕркелĕ иртмеççĕ йе палăртса хунă кун пулмаççĕ. Йалхуçалăх институтĕнче отчотпа суйлав пухăвне хатĕрлемен пирки апрелĕн 25-мĕшĕнче суйлав пухăвне иртермен. Пухура 18 коммунистран 6 коммунис пыман. Çавăн пекех Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче те коммунистсем пухăнман пирки суйлав пухăвне апрелĕн 25-мĕшĕнче иртереймен.

Йĕлчĕк районĕнче виçĕ парторганизацинче парторгсем отчотсем çырса хатĕрлемен пирки пухусене планпа палăртнă кун иртермен. Ку шута парти райкомĕ çумĕнчи пуçламĕш организаци те кĕрет.

Кувакина районĕнчи „12 лет Октября" колхоз çумĕнчи парторганизацинче отчотпа суйлав пухăвне касхине 6 сехетре, йалсовет канцелярийĕнче иртерме шутланă; Кайарах 7 сехете куçарнă. Анчах 7 сехетре те 7 çын вырăнне 3 çын çеç пынă. Кун хыççăн пухăва колхоз правленине куçарнă, унтан парти кабинетĕнче 9 сехет те 15 минутра тин пухăва уçнă. 10 сехет тĕлне тепĕр коммунис пынă. Йемашĕв парторг отчота хатĕрленмен пирки йăлчĕшĕн кăна отчот пекки туса иртерне. Вăл хăйĕн йанăшĕсене те, уйрăм коммунистсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене те критиклемен. Пуху Йемашов йулташа суйламан.

Кувакина МТС-ĕнчи парторганизацинче те пухăва палăртнă кун парторга иртермен.

Çавăн пек çитменлĕхсем ан пулччăр тесен партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕсене большевикла йĕртсе пыни кирлĕ. Партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавне партин шалти демократине çирĕппĕн пăхăнса, инструкцийĕ пăсмасăр, большевикла критикăпа самокритикăна хуйулăн сарса иртермелле. „Партин йĕртсе пыракан органĕсене суйласси партилĕ-политикăлă ĕçе малашне те пур майсемпе те хăпартса пырассишĕн, парторганизацисе массăсемпе çыхăнса тăрассине çирĕплетессишĕн тата парторганизацисен умĕнче тăракан политикăлă-хуçалăхла задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешнипе пулса иртмелле.

Парти организацисен задачи партин йĕртсе пыракан органĕсене çителĕклĕ тĕрĕсленĕ, пирĕн партишĕн чунтан паранса ĕçлекен, халăх тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре тĕрĕсленнĕ тата парти ĕçне вĕçне çитиех сыхласа тăма пултаракан большевиксене суйласа хăварасси пулать".

(ПСК(б)П Тĕпкомĕ „Партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртерессии çинчен" йышăннă постановленирен).

П. В. Перлов.

Весь советский народ будет голосовать за дальнейшее укрепление наших доблестных Красной Армии и Военно-Морского Флота!

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавĕ тĕлне ИЗОГИЗ кăларнă плакат, ăна В. Стенберг художник ӳкернĕ.

Сойузфото репродукцийĕ.

Комсомолкă—агитатăр

КАНАШ (хамăр корреспондент). Вырăскас Пикшик йалсоветĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренессине тивĕçлĕ вырăна лартнă. Кунта пĕтĕмпе 688 суйлавçă, вĕсене пурне те суйлав саккунĕсене вĕрентмели кружоксене йавăçтарнă. Ку тĕлĕшпе суйлавçăсене уйрăм ушкăнсене уйарнă. Çавăн пек ушкăнсем пурĕ—23. Кашни участкăшăн уйрăм агитатăр ответ тытать. Вĕсем ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă чухне ĕçленĕ агитатăрсемех. Агитатăрсем хăйсен ĕçне лайăх пĕлеççĕ. Вĕсенчен пилĕкĕшĕ—хĕрарăмсем.

Йалсоветĕнче хут сахал пĕлекенсем 18 çын. Вĕсене хут сахал пĕлекенсен шкулĕнче вĕрентеççĕ. Вĕсем майăн 8-мĕшĕнче вĕренсе тухаççĕ.

Суйлавçăсем хушшинче суйлав саккунĕсене вĕренессипе массăлă агитацилĕ ĕçе анлăн сарса йанă. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене кунта кашни суйлавçăна шалларас тĕлĕшпе старик-семпе 2 хут, çамрăксем хушшинче 3 хут, хĕрарăмсем хушшинче 2 хут уйрăм пухусем туса иртерне. Çак кунсенчех суйлав округĕсемпе паллаштарма йалсоветĕнчи пĕтĕм суйлавçăсене пухса каласу туса иртереççĕ.

Чылай суйлавçăсем декабĕрĕн 12-мĕшĕ хыççăн 18 çул тултарнисем, пĕрремĕш хут Верховнăй Совета суйлаççĕ.

М. Дмитрийĕвă колхозницă апрелĕн 22-мĕшĕнче 18 çул тултарчĕ. Вăл пĕррĕмĕш хут вăрттăн сасăлать.

Дмитрийĕвă колхозăн пур ĕçĕнче те хастарлăн ĕçлет. Иртнĕ çура вăл 180 ĕçкунĕ тунă. Суйлав правине илме çул çитнишĕн вăл çав тери савăнать.

Çавнашкалах П. Афанасйĕв та хăйĕн пурнăçĕнче пĕрремĕш хут Верховнăй Совета суйлать. Вăл апрелĕн 25-мĕшĕнче 18 çул тултарса, суйлав правине йышăнма тивĕç илчĕ. Çак тивĕçлĕхпе Афанасйĕв вĕçĕмсĕр мухтанать.

—Епĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене пĕлет 3 хут. Сталинла Конституцине 3 хут, Сталин йулташ советсен 8-мĕш Чрезвычайлă съесĕнче ССР Союзĕн Конституци пройекчĕ çинчен тунă доклада 3 хут вуласа тухрăм. Ĕçхалăхĕшĕн чĕрĕрен ĕçлекен çынсемшĕн—коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлатăп,—тет Афанасйĕв йулташ.

Суйлавçăсем хушшинче хастарлăн ĕçлекен агитатăрсенчен Данилăвă комсомолкăна кăтартма пулать. Вăл Пикшихри тулдимар вăтам шкулта вĕрентет. Вăлах комсорг. Суйлавçăсем хушшинче тимлĕн ĕçлет.

Данилăвă йулташ йĕртсе пыракан участкăра 34 суйлавçă шутланать. Вăл çав суйлавçăсене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисем çинчен тĕплĕн те ăнланмала каласа парать. Агитаци ĕçĕнче лайăх метăдсемпе сарлакан усă курать. Ун участкине кĕрекен суйлавçăсенчен чылайăшĕ — ачалă хĕрарăмсем. Çавăнпа та агитатăр суйлав саккунĕсене вĕрентме суйлавçăсем патне килĕрен çӳрет. Хăйпе пĕрле вăл йаланах суйлавçă патне кайнă чух клобуе, карттă, суйлав çинчен калакан литературăсене илсе пырать. Пайанхи куна çитсе вăл суйлавçăсемпе 4-шер занятии туса иртерне те ĕнтĕ.

Кунсăр пуçне Данилăвă йулташ старик-суйлавçăсемпе 2 хут, 18 çулхи çамрăк суйлавçăсемпе 3 хут, хĕрарăмсемпе 1 хут тата 6—7-мĕш классенче вĕренекен ачасемпе 2 хут уйрăм пухусем туса иртерне.

Никшихри тулдимар вăтам шкулти 7 „б" класра вĕренекен П. Павлăв, аşшĕпе амăшне РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине вĕренме пулăшать.

Çапла вара, Данилăвă агитатăр пионерсене хисеплĕ ĕçе хутшăнтарать.

Вăл ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра та хастарлă агитатăр пулса ĕçленĕ.

Арк. Нестĕрăв.

Округсенчи суйлав комиççисен халĕ тумали ĕçĕсем

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком президиумĕ йышăннă тăрăх, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççисен составне çирĕплетнĕ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççисенче 941 çын ĕçлеççĕ. Вĕсем орденлă Чăваш республикĕнчи чи лайăх çынсем: хапрăксемпе савăтсенчи стахановĕцсем, ударниксем, социалисăмла йалхуçалăхĕнчи малта пыракан çынсем, совет интеллигенцин чи лайăх представителĕсем. Вĕсене ĕççынни общчĕствисем, общчĕствăлă организацисем палăртнă.

Округсенчи суйлав комиççи членĕсем хушшинче пирĕн республикăри паллă çынсем пур. Акă вĕсем: Йетĕрнери спирт савăтĕнчи стахановец-рабочи, 61 çулхи А. В. Волкăв, Вăрмар МТС-ĕнчи трактăрис, орденоносĕц И. А. Александрăв, Куславкка комбинатĕнчи рабочи-стахановĕц В. Н. Никифăрăв, Шупашкарти спирт савăтĕнчи стахановка П. М. Скачковă, Шупашкар пульницинчи врач А. А. Воранăв, Апат çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариатĕнчи инженер С. М. Вишневски, Улатăрти пăравуссем йусакан савăтри слессăр С. И. Алексейĕв, Çĕнахпӳрт йалсовет председателе, ЧАССР Тĕпĕçтăвком членĕ О. Ф. Каштанăвă, Вăрнарти туллимар вăтам шкулри учительницă Н. П. Петровă, Кувакина районĕнчи „Новь" колхоз председателе А. Г. Ануфрийĕв.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççисен составне лайăх ĕçлекен йалсовет председателĕсене 6 çынна, малта пыракан колхоз правлени председателĕсене —12, бригадирсене—7, йалхуçалăх специалисĕсене—11, чи лайăх колхозниксене—8, производствăра ĕçлекен рабочисене — 7, учителсене—6, районти хаçат редакцисенчи работниксене—2, районти организацисене йĕртсе пыракансене—1, Осоавиахим ĕçĕнче ĕçлекенсене 1 çын суйланă.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Советсен суйлав кампани вăхатĕнче округсемпе участкăсенчи суйлав комиççисен питĕ пысăк ĕçсем туса иртермеле. ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлав вăхăтĕнче 15 округ пулнă пулсан, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе 103 округ ĕçлет.

Округри тата участкăри кашни членăн хăйĕн çине хунă хисеплĕ ĕçе пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлемеле.

Округсенчи суйлав комиççисен халех пысăк ĕçсем тумала. Чи малтан вырăнти Советсем суйлавçăсен спискисене тĕрĕс тунине тĕрĕслемеле, майăн 26-мĕшĕ тĕлне суйлавçăсен спискисене пурне те пăхса тухма курăнакан вырăнсене кăларса çакмала. Райĕçтăвкомсем суйлав участкисене вăхăтра тунисене округри суйлав комиççисен тĕрĕслесе тăмала. Участкăсенчи суйлав участкисен кашнин хăйĕн номĕрĕ пулмала.

Советсен тата участкăсенчи комиççисен суйлав документĕсем: (суйлавçăсен спискисем, „сасăлама права паракан удостоверени" тăрăх сасăланакансен списки, участкăсенчи суйлав комиççисен сасăламали протоколсем, шут листисем, „сасăлама права паракан удостоверенисем") çителĕклĕ пуррине тĕрĕслени кирлĕ. Кашни суйлав участкине, округа валли кирлĕ таран суйлав бӳллетенĕсене хатĕрлемеле, вĕсем ийунĕн 10-мĕшĕ тĕлне участкăсенчи суйлав комиççисен пулмала. Ку çеç мар, советсенче участкăсенчи суйлав комиççисене кирлĕ йапаласем: пӳлĕмсем, суйлав йĕшчĕкĕсем, тата ыттисем йурăхлине, çителĕклине тĕрĕслемеле.

Суйлав комиççисен агитатăрсемпе, пропагандистсемпе, политвулавçăсемпе тачă çыхăну тытмала, вĕсене ĕçре пулăшмала.

Халăх тăшманĕсем пирĕн тăван çĕршыври халăхсен пĕрлĕхне хавшатма хăтланаççĕ, суйлав комиççисен вĕсене хирĕç хытă кĕрешсе пырса РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Советсен суйлавне большевикла хатĕрленмеле.

Пронин.

Виçĕ бригадă хушшинчи ăмăрту

ВĂРНАР. Фосфорит савăтĕнчи Крышков, Андрейĕв тата Тимофейĕв йулташсен бригадисем пĕр-пĕрипе ăмăртăва тухнă. Йулашки вăхăтра Крышков йулташ бригади малта пырать. Ку бригадă апрелĕн 22-мĕшĕнче плана 114 процент тултарнă.

Фосфорит рудине вăхăтра парса тăракан бригадăсем чылайах лайăх ĕçлемеле. Пайанхи кун савăтра пĕр çитменлĕх пур—транспăрт начар ĕçленипе руда çителĕклĕ турттарса пымаççĕ. Çавна пула час-часах простойсем пулаççĕ. Акă Андрейĕв йулташ бригади апрелĕн 25-мĕшĕнче 1,15 сехет, Тимофейĕв йулташ бригади 22—23-мĕшĕсенче пачах ĕçлемен.

Руда çителĕклĕ пулсан, бригадăсем пурте плана ытлашшипех тултарма пултараççĕ. Андрейĕв бригади апрелĕн 19 мĕшĕнче—115 процент, 20-мĕшĕнче плана 132 процент тултарнă.

Дирекцин руда тăратассине йĕркелемеле.

Вată чăптаçсем

ТРАК. Енĕшкассинчи чăпта çапакан промысла ертелĕнче старикĕсем те ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕçре пример кăтартаççĕ. Кирилл Куçмич иртнĕ çулта 2.576 штук чăпта çапса, плана 128 процент тултарнă. Кăçалхи çулăн пĕрремĕш кварталĕнче тагах та пысăк ӳсĕм турĕ, вăл 1098 штук чăпта çапса кăларчĕ (137 процент). Илйа Никитин 66 çулта. Хавасла старик. Иртнĕ çулта 2592 штук чăпта çапрĕ, кăçал виçĕ уйăх хушшинче 1002 штук çапса кăларса, плана 125 процент тултарчĕ.

Ертел правленийĕ вĕсен ĕçне хакласа, иртнĕ уйăхра иккĕшне те 200-шер тенкĕ укçа парса премилерĕ.

Ертелри ытти рабочисем те тăрăшса ĕçлеççĕ. А. Семенавă, А. Михайлăвă, В. Кириллăв, Т. Дунайĕв йулташсем нормăсене 135—160 процентшар тултарса параççĕ.

Н. Йашков.

4. кружок организациленĕ

„Çĕнĕ Йункă" (Тутаркас р.) колхозра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме 4 кружок организациленĕ, унта 50 çын вĕренеççĕ. Халĕ, çураки вăхăтĕнче, кашни бригадăрах политвулавçăсем ĕçлеççĕ, çтена хаçачĕсем кăлараççĕ.

В. Йадыков.

Майăн 1-мĕшĕнче Шупашкарта пулнă демонстрацире.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

1938 ÇУЛХИ ÇУРАКИ

МАЛТИСЕН ПРИМЕРӖ

ЙЕТӖРНЕ. Тури-Ачакри „Крестьянская газета“ колхозӗн Анат Ачакри „Çӗнӗ пурнăç“ колхоз вăйлă тырпул илес тӗллӗвпе туна социализмла ăмăрту договăрне пурнăçласах пыраççӗ. Вӗсем кăна пур йенчен те хатӗрленсе çитнипе кӗтсе илсе, пайăнхи куна чылай ӳсӗмсем турӗç. Çак икӗ колхозра çурхи ака çĕне пӗтерсе, 120 гектар ытларах тӗштырă акнă, 54 гектар çинчи кӗр калчисене апат панă.

Ку колхозсенче культмассăлă ӗçсе те лайăх организациленӗ. Кашни бригадăрах агитатăрсем ӗçлеççӗ, стена хаçачӗсем кăлараççӗ.

„Çӗнӗ пурнăç“ колхозри колхозниксем „Крестьянская газета“ колхозран пример илсе стахановла йӗркипе çураса пынă. Стахановецсен йышӗ ӳсеç пырать. Г. Шоркин сухăçă куллених ӗç нормине 150 процент тултарса пырать. Скворцов, Ф. Йефимăв, М. Соловйов колхозниксем те куллених ӗç нормине 170 процент таран тултараççӗ.

Асламасри сурттă вăрлăхсем тăвакан „Искра“ колхозра агротехника кăтартăвӗсене тӗрӗс пурнăçласа пыраççӗ. Кунта пайăнхи куна 125 гектар çинчи кӗр калчисене сӳреленӗ, 40 центнер çурхи тулă вăрлăхне термически майпа тасатнă. Кунсăр пуçне акмали вăрлăхсене пӗтӗмпех йаровизациленӗ. Çав ху шăрах, Побăлкассинчи, Ирçери колхозсем майăн 1-мӗшне çитсе те акана тухман.

Уйкас йалсоветне кӗрекен колхоз правленийӗсем ӗçлекен пуçлăхсем ӗçсе сӳренне акана 4 кун кайа йулса тухрӗç.

Района кăçалхи çураки ӗçӗпе чылай кайа йулса ӗçлет. Районри çӗрӗç пайӗнче ӗçлекенсем колхозсемпе çителӗклӗ таран йӗртсе пымаççӗ.

Н. Цветков.

Чăваш АССР Çӗрӗç Халăх Комиссариачӗн 1938 çулхи майăн 5-мӗшне çураки ӗçӗ мӗнле пынине кăтартакан сводки

Районсем	Тӗштырăсем акмали план	Пурӗ тештырăсем акнă.	Плана тултарнă (процентпа)
Улатăр	8670	2622	30,2
Елӗк	14405	3616	25,1
Патăрйел	14340	9424	65,8
Вăрнар	14640	3511	24,0
Пӗпрес	11850	4576	38,6
Ишлей	12235	1581	13,0
Канаш	11320	2315	20,4
Ӳуславкка	10885	7075	65,0
Хӗрлӗ Чутай	10150	3289	32,4
Куславкка	10885	7075	65,0
Сӗнтӗрвăрри	10585	4033	38,1
Пăрачкав	13020	2665	20,5
Турхан	8030	1947	24,2
Тутаркас	14400	2563	17,8
Трак	12120	4484	37,0
Вăрмар	17050	3255	19,1
Çӗрпӳ	16115	1681	10,4
Шупашкар	10095	1226	12,2
Шăмăршă	7955	4069	51,2
Шăхасан	13600	6500	47,7
Шăнкăртам	7680	7070	92,1
Çӗмӗрле	7590	2657	35,0
Йетӗрне	11010	4395	40,0
Пелчӗк	15490	11016	71,1
Тăвай	11995	4936	41,1
ЧАССР-пе	295360	102106	34,6

Асăрхаттарни: Канаш, Кувакино, Турхан, Çӗрпӳ, Шăхасан районӗсем тăрăх майăн 5-мӗшне сводкăсем паман пирки, майăн 1-мӗшне панă цифăрсене кăтартнă.

Агротехникă ӗççене пăсмала мар

ШАХАСАН. Майăн 4-мӗшне районӗпе 6.466 гектар, вăл шутран колхозсене 6,342 гектар ытларах тӗштырăсем акнă. Паровизациленӗ вăрлăхпа 1.593 гектар çинче çеç акнă. Майăн 4-мӗш тӗлне районри 4 колхозра тӗштырăсене акса пӗтерӗ.

Шăхасан районӗнчи колхозсенче кăçал кӗр калчисене апат парас тăта вӗсене сӳрелес тӗлӗшпе çине тăрса ӗçлени пулман. Районӗпе кӗрхи калчасене 605 гектар çинче çеç апат панă.

Хăшпӗр колхозсенче агротехникă ӗççисене пăса ӗçленӗ. Акă, Шăхасанти „Хӗрлӗ Октябрӗ“ колхозра 3 гектар çинче агротехника ӗççисене пăхмасăрах акса хăварнă. Çак колхозрах кӗрхи калчасене пӗр гектар та сӳремен. 30 центнер çӗрулми вăрлăхне йаровизацилеме хунă. Колхозниксем çӗрулмине тимӗр кӗреçепе пăтратса тăнипе, ăна сиенленӗ.

Шăхасан, Сител, Матăш, Питтиккасси, Шӗкӗр колхозӗсенче çуракине пысăк пахалăхпа иртересшӗн кӗрешӳве тивӗçлипе пуçарса пыни çук. Колхозниксене колхозницăсем хушшинче стахановла ӗçлессине сарса пымаççӗ. Çавăн пекех тата çак колхозсенче çейăлкăсем пур чухнех апла акаççӗ. Кӗрхи калчасене пачах сӳремен.

Шăхасан райçӗрӗç пайӗн çураки ӗçӗнчи колхозсене тивӗçлипе йӗртсе, пулăшса пымала. Çуракине кӗске срукрах пысăк пахалăхпа иртерессишӗн кӗрешӳве анлăн пуçарса пымала.

К-н.

120 пăтшăн кӗрешеççӗ

Туппай Ӗмӗлти (Сӗнтӗрвăрри р.) „Красная Чувашия“ колхоз сурттă вăрлăхсем акса тăвас тӗлӗшпе ӗçлет, кăçалтан пуçласа çак колхозăн Сӗнтӗрвăрри, Куславкка районӗнчи колхозсене сурттă вăрлăхсем туйантарма тытăннă.

Колхоз кăçал вăтам хисеппе кашни гектартан 120 пăт тӗштырă туса илессишӗн ăмăртăва анлăн пуçарса пырать. Колхоз, апрелӗн 26-мӗшӗнче акана туххса, майăн 3-мӗшне пӗрчӗлӗ тӗштырăсене акса пӗтерчӗ. Пурӗ 169 гектар çинче пӗтӗмпех сурттă та таса вăрлăхсемпе акса хăварнă.

Колхозри бригадăсенче ӗç вăйне тӗрӗс вырнаçтарса тухни, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăмăртса ӗçлессине сарса пыни çуракине кӗске срукрах пысăк пахалăхпа иртерме май парчӗ. Çурака ӗçӗнче таваттăмӗш бригадă мала тухрӗ. Ку бригадă ытти бригадăсенчен чи малтан, апрелӗн 30-мӗшӗнче тӗштырăсем акас ӗçе вӗçленӗ. Бригадăри Г. Захарăв, И. Вернов, В. Ильюшкин колхозниксем плугпа сухаласа нормăна куллӗнех ытлашшипех тултарса пычӗç.

„Красная Чувашия“ колхоз хӗл вăхăтӗнче хатӗрленӗ тислӗкпе, фекалипе, кайăк-кӗшӗк тислӗкӗпе тата ыттисемпе тӗрӗс, вăхăтра усă курнă.

Вăрлăхсене пӗтӗмпех йаровизацилесе акнă. Кăçал колхоз пуçласа нитрагинлаласа акнă. Халӗ колхоз çӗрулмисене мульчировани тума хатӗрленет.

Ыраш калчисене 37 гектар çинче апат панă, вӗсене сӳреленӗ.

В. Чупраков.



ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Мускаври Пролетарилӗ стрелковăй дивизин бойецӗсем парадра.

Д. Чернов фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

КӖСКЕН

** 2 пин тенкӗ пулăшу илчӗ. Кăшаркассинчи (Çӗрпӳ районӗ) „Пионер“ колхоз членӗ Йегор Федăрăвăн çемйинче 10 сын. Ачасем — 7. Унăн çемйи халӗ государствăран 2 пин тенкӗ пулăшу илчӗ. Вăл укçапа Федăрăв хăйӗн ачисене тумтирсем, кӗпе-йӗмсем тата ытти вӗренмели хатӗрсем илсе пачӗ.

А. Иванов.

** 100 киле радио. Ишекри (Ишлей р.) Сталин йачӗпе тăракан колхоз 100 киле радио кӗртрӗ. Малашне кашни киле радио кӗртме шутлаççӗ.

А. Наумăв.

** Уйри столовăй. Палтайри (Йетӗрне р.) Буденный йачӗпе тăракан колхоз колхозниксене ака вăхăтӗнче вӗри апат çитерме уйра столовăй уçрӗ.

М. Анисимăв.

** Горький облаçӗнчи 1-мӗш колхоз театрӗ Йетӗрнере. Апрелӗн 23-мӗшӗнчен пуçласа 30-мӗшӗнчен Йетӗрнере Горький облаçӗнчи колхоз театрӗ ӗçлерӗ. Çав хушăра вăл „Год девятнадцатый“, С. М. Киров Астрахăне йӗпле хӳтлени çинчен, А. Островский „Шутники“ тата „На бойком месте“ пйесăсене лартса пачӗ. Хула ӗççынниснемпе колхозниксем çпектакльсене хавасланса пăхрӗç.

Й. Парамонăв.

** 12 çын вӗренсе тухрӗ. 1937 çулта ПСК(б)П Тутаркас райкоӗ Иунькара колхоз активне вӗрентме курс организацилерӗ.

Колхоз активӗ Карпинский çырлă „Беседы о социализме“ кӗнеке тăрăх тӗренсе пычӗ, çавăн пекех партипе правительствăн йышăннă решенийӗсене тата Иванов йулташ çырнине Сталин йулташ ответне тӗплӗн сӳтсе йаврӗ. Халь курс хăйӗн программине вӗренсе пӗтерчӗ. Унтан 12 çын вӗренсе тухрӗç.

В. Йадыков.

Хулана 19.000 екземплăр хаçат-журнал килет

Халăхи вăхăтра Шупашкар хулине 7.789 екземплăр хаçат тата 11.466 екземплăр журнал, мӗн пурӗ 19.255 екземплăр килсе тăрать. Вăл шутран çак хаçатсем ытларах саланаççӗ: „Красная Чувашия“— 2.749 екз., „Правда“—808, „Известия“—675, „Чăваш Коммунӗ“—669 екземплăр.

Уйрăмах кунта хаçат-журналсене çарас тӗлӗшпе лайăх ӗçлекен уполномоченнăйсене па лартса хăвармала. Хулăра ку тӗлӗшпе лайăх ӗçлекенсем çаксем: Кошелӗв — профсойузсен сурттӗнчен, Пирогăв — Çӗрӗç Халăх Комиссариачӗнчен, Овдин—стройтехникум, Михайлăв—медрабфак, Захарăва—Чăваш Тӗпсӗтавкомӗнчен. Вӗсем хăйсем çине хунă ӗçе ответлăхне туйса ӗçлеççӗ, подписчиксем те вӗсене йуратаççӗ.

Анчах, пур те сӳлте асăннă йулташсем пек лайăх ӗçлемеççӗ-ха. Хăш-пӗр предприйатисемпе учрежденисенче хаçат журналсене сарма уйăрнă çынсем пачах та çук. Партипе профсойуз организацийӗсен вăл уполномоченнăйсене уйăрса, вӗсене йӗртсе пымала.

Е. Осипăв.

Физкультура

Липăвкăри (Турхан районӗ) Ленин йачӗпе тăракан ертел сумӗнче иртнӗ çул „Спартак“ спорт обществин организацилерӗç. Халь общества 40 çын тăрать. Кăçал 9 член Ворошилăв пек тӗл переекенсен значокне илчӗç. Чылайăшӗ ГТО значокӗн хӗллехи нормисене парса пӗтерчӗç. Йӗпреçре пулса иртнӗ йелтӗрçӗсен ăмăртăвӗнче общества 3-мӗш вырăна тухса диплом илчӗ. Кунсăр пуçне Сталин йулташ VIII-мӗш Чрезвычайнăй Сйесра тухса каланă доклада çырла патефон пластинкисем тата библиотекă парса премилерӗç. Кăçал обществăн футбол, волейбол тата тӗрлӗ вăйă выльамали площадкăсем пулаççӗ.

И. Архипăв.

Ексккурсине каяççӗ

Чăвашкупромсойуз 1938 çулта алăстаç-стахановецсене 140 çынна ексккурсине йама палăртнă. Пайăнхи куна ексккурсине каймали 75 путовкăна илме договăрсем турĕ. Вăл шутран Мускава 15 çын, Ленинграда—20 çын, Днепрогеса 10 çын, Кийева 10 çын, Хусана 10 çын тата Горькине 10 çын каяççӗ.

Апрелӗн 28-мӗшӗнче Çатракасси алăста ертелӗнчи (Шупашкар р.) стахановецсем: Ивэн Андрейев, Софйа Никитина, Апаккассинчи алăста ертелӗнчи алăстаçсем Никитина, Игнатйӗва тата ытти йулташсем Горьки хулине ексккурсине тухса карӗç.

Н. Йашков.

Редакцине килнӗ çыру

Мана пулăшмаççӗ

(Художник çырăвӗ)

Чăваш Автономийӗ 20 çул тултарнă тӗле усăлакан выставкăна епӗ пысăк хавасланса хатӗрленни çинчен „Чăваш Коммунӗ“ хаçатра çырса пӗлтернӗччӗ. Çакăн хыççăн мăн пата Чăвашсен Тӗп Музейӗнчен çыру килчӗ, вăл çырура вӗсем картинăсене хăвартрах хатӗрлесе çитерме ыйтаççӗ. Епӗ çавăнсăр ответ паман. Çав вăхăтрах хамăн ӗçри чăрмавсем çинчен те, картинăсем тума кирлӗ материалсем (краскă, хут, пир т. ыт. те) çителӗксӗрри çинчен пӗлтертӗм. Музей манăн çакă ыйтăва халăх творчӗствин çуртне панă, мана пулăшу пама ыйтнă. Анчах халăх творчествин çуртӗнчен мана нимӗнпе пулăшу та, ответ та памарӗç. Çыру хыççăн çыру çырма пуçларăм. Йулашкинчен халăх творчествин çуртӗнче ИЗО-методис пулса ӗçлекен Магнитский йулташ: „Сан пата краскăсем йатăмăр, çырă вусене пирӗн ӗçне ытлашши критиклесе сырарăн, апла аванах мар“—тесе пӗлтерчӗ. Мӗншӗн аван мар-ши? Мана критиклес мар-ха Магнитский ӗçне? Пирӗнпе, çамрăк художниксемпе нимӗнех те ӗçлемест вăл. „Красăксем йатăм“ тесе те суйса çеç пӗлтерет. Епӗ вăл краскăсене халӗ те илмен. Çапах, кунта хама кирлӗ материалсене тупкаласа вырӗ картина турăм епӗ. Магнитский патне йатăм. Манăн картинăсем выставкăра хисеплӗ вырăн йышăнни çинчен калдех Магнитский урлă мар. „Чăваш Коммунӗ“ хаçат урлă пӗлтӗм. „Выставкăра пулнă Ижейӗв йулташ: „Арăхин тунă картинсем чăн-чăнах мухтава тивӗç, вӗсем чăваш халăхӗн иртнӗ пурнăçӗн епизочӗсене ӗнентерӳллӗн кăтартаççӗ“ тесе çырнăччӗ хаçатра. „Замечательные рисунки представил Арюхин (картина „Расправа“, „Этап“) тесе çырнăччӗ „Красная Чувашия“ хаçатра та.

Ку картинăсемшӗн мана преми те панă пулнă. „Сана виççӗмӗш преми панă, анчах сумми мӗн чухлине пӗлеймостӗп“ тесе çырса пӗлтерчӗ Магнитский. Ыйтас килет: камăн пӗлмелле-ши? Мана премин мӗншӗн халӗ те йарса памаççӗ? Ку ыйтăва епӗ Искусствă ӗçӗсен комитетне те парса пăхрăм, унтан та мана никӗ ответ та памарӗç. Искусствă ӗçӗсем йӗртсе пыракансем хăçанччен çапла пирӗн çине, йалти художниксем çине, пурне вӗрт пăхса пурнăç-ши?

Ф. Арюхин.

Кӳсӗн Таван йалӗ, Çӗмӗрле р.

Атăл çинчи трамвайсем

Атăл çинче икӗ трамвай расписанипе çӳреме пуçларӗç. Пӗр трамвайе Шупашкарпа Лопатина хушшинче çӳрет, Шупашкартан анатала ирхине 10 сехет те 40 минутра кайать. Тепри—Илйинкăпа Куславкка хушшинче çӳрет, ку трамвай Шупашкартан анатала кăçхине 10 сехет те 40 минутра, таваллаИлйинкăна ирхи 7 сехетре кайать.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Шупашкар округ суйлав комиççийӗ пӗлтерни

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Шупашкар округ № 718 суйлав комиссийӗн адрӗсӗ çапла: Шупашкар хули, Хресчен çурчӗ, 8-мӗш пӳлӗм, тел. № 1—99.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Вăрнар округ суйлав комиççийӗ пӗлтерни

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Вăрнар округ суйлав комиссийӗн адрӗсӗ çапла: Вăрнар, Культура çурчӗ, иккӗмӗш хутлăх, телефон № 62.

АЧАСЕН

КАРШЛĂХРИ САНАТОРИЙӖ

Кăçал майăн 15-мӗшӗнче уçăлать. Путовкăсене Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачӗ парать тата договăрсене те унтах тумала.

САНАТОРИНЕ культурник - байанист, Педагог, Медицинă ӗçне пӗлекен сестрасем, повăр помошникӗ, официантсем, кастелянша тата кладовщик

кирлӗ

2—1

Чăвашстройтреста

рабочисем, работницăсем, штукатурсем, каменщиксем

КИРЛӖ

Рабочисем валли хватор пур.

2—2

Шкул ачисем, шкул ачисен ашшӗ-амăшӗсем тата пур граждансем!

КОГИЗ-ăн Шупашкарти, Патăрйелӗнчи, Çӗрпӳри, Йетӗрнери, Çӗмӗрлери, Куславккари, Сӗнтӗрвăрринчи, Канашри, Улатăрти магазинӗсем

кивӗ учебниксене сутăн илеççӗ.

Тытканлă учебниксене (вырăсла йе чăвашла чӗлхепе кăларнисене) магазина сутăр. Сутмалли-илмели условисем КОГИЗ магазинӗсенче пур.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикӗнчи упрăвӗ.

2—2

„ХИМЛЕССЫРЬЕ“

Свердловскри кантурне

сухăр йухтаракан маçтăрсем, вăдмышчиксем тата сухăр пустаракансем

кирлӗ

Ӗçлеме çӗре вырăна çитме тата багаж илсе кăйма çул укçине организаци тӳлет. Çавнашкалах сутăчнăй параççӗ, тата ытти расхутсене те тӳлеççӗ.

Ытти условисемпе тӗплӗн паллашма районсенчи уполномоченнăйсем патне пымала. Уполномоченнăйсем — Пăрачкавра, Йеçачкре тата Канашра пур.

„Свердхимконтора“.

2—1

ГИДРОУЗЕЛĂН

Инженерлă-геологи ушкăнне

(Кадыков урамӗ, № 6)

КОЛЛЕКТĂРСЕМ КИРЛӖ

Тăхăр çулă шкул пӗтернисене (арçынсене тата хӗрарăмсене) йышăнаççӗ, малтан вӗсен инженерлă ушкăн çумӗнче практика ӗçлеме пулмала.

Вылăхсене çитерме курăксем вăррине илме ВАСКĂР!

Вылăхсене çитермелли курăксен вăррине илме çарансене лайăхлататăр, çавăнпа пӗрлех вылăхсене çитерме курăк нумай хатӗрлеме пултаратăр.

Пур колхозсене, организацисене тата уйрăм граждансене Госсортфонд Канашри—расчотный счот № 251, Улатăрти—расчотный счот № 29, Шупашкарти—расчотный счот № 179 тата Çӗрпӳри—Шупашкарти расчотный счочӗ №179 вăрлăх базисем урла çарансем тата вылăхсем çӳретмели вырăнсем çине акмали курăксен вăррисене ирӗклӗн сутни çинчен пӗлтерет.

Çаран çинчи овсаницă вăрри пӗр килограм—3 т. 25 пус.

Тимофейăвкă вăрри пӗр килограм—4 т. 10 пус.

Ыраш курăкӗ вăрри пӗр килограм—5 т.

Тилӗ хӳри курăк вăрри пӗр килограм—2 т. 60 пус.

Кусемсӗр пуçне тата хӗрлӗ клевер, люцин вăрлăхсем пур. Тӗплӗн çак адреспе ыйтса пӗлме пултаратăр: Шупашкар хули, Ленин урамӗ, 42. Телефон № 57.

Госсортфонд.

Ăмăрту çураки ăнăçлăхне татса парӗ

Шăхасан районӗнчи Атнашри Кирăв йачӗпе тăракан колхоз кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 120 пăтран кайа мар тӗштырă туса илсе, Сталин йулташ çулсерен 7—8 мӗлйард пăт тӗштырă туса илмелле, тесе панă лозунга пурнăçа кӗртме майпа Чăваш республикӗнчи колхозсене чӗнсе каларӗ. Хăйӗн çине тататкă обйазательствăсем илчӗ. Кунпа пӗрлех Ушанарти Калинин йачӗпе тăракан колхозпа социализмла ăмăртăва тухрӗ.

Çак колхозсем çуракине пур йенчен те тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илчӗç. Çуракине тухиччене колхозниксемпе колхозницăсене уйрăм ӗçсем çумне çирӗплетсе тухнă. Ӗçе тӗрӗс организацилени çуракин малтанхи кунӗсемех ăмăрту анлăн сарăлса пычӗ.

Атнаш колхозӗнче

Атнашри Кирăв йачӗпе тăракан колхоз тӗштырăсене 6 кун хушшинче акса пӗтернӗ. Колхозри 8 бригадă пурӗ 430 гектар çинче, вăл шутран 100 гектар тулă, 260 гектар сӗлӗ, 17 гектар урпа тата ыттисене те акса хăварнă. Çапла колхоз майăн 3-мӗшне тӗштырăсене пӗтӗмпех акса пӗтерчӗ.

Бригадăпа бригадă, колхозниксемпе колхозниксем кашниех пӗр-пӗринпе ăмăртса ӗçлерӗç. Комсомолка—Степанăва Васса йӗртсе пыракан пӗррмӗш бригадă иккӗмӗш бригадăпа ăмăртса ӗçлерӗ. Ăмăртура Степанăва бригади малти вырăна тухрӗ.

Бригадăсенче ӗç вăйне тӗрӗс йӗркелерӗ. Вăрлăх турттаракансенчен пуçласа сухалакансем, акакансем, сӳрелекенсем пăтне ситичченех колхозниксем хăйсен ӗçне лайăх пӗлсе тăнă. Кашни колхозник, колхозницă пур ӗçе те тӗплӗн тума тăрăшнă.

Агротехникăла ӗççене тӗрӗс тата хăй вăхăтӗнча туса пыни вăйлă тырпул туса илме пулăшать. Çавăнпа та Атнаш колхозниксем агротехникăлла ӗççене анлăн туса пынă. Вăрлăхсене пӗтӗмпех вытпуççӗрен тасатса, сурттă та паха вăрлăхсемпе акса хăварнă. 115 гектар çинче йаровизациленӗ вăрлăхпа акнă. 3 гектар çинче нитрагинизаци туна.

Кӗрхи калчасене сӳренӗ тата 80 гектар çинче тӗрлӗрен минераллă удобренисем апат панă. Халӗ çурхи калчасене мульчировани тума ыраш улăмӗ турасах хатӗрленӗ. Колхозăн 25 гектар çинче çӗрулми лартса хăвармалла. Халь çӗрулми вăрлăхне йаровизацилесе хунă.

Колхозниксем хушшинче стахановла ӗçлекенсен хисепӗ ӳссех пырать. Кунта çуракинче çейăлкăсемпе ӗçлекенсене уйрăмах палăртса хăвармала. Çейăлкăсемпе ӗçлекенсем—В. Павлăв, А. Алексейӗв колхозниксем хăйсен куллених ӗç нормисене 150—200 процент таран тултарса пычӗç. Плугпа ӗçлекен П. Чернов колхозник сухалас нормăна куллених 200-шер процент тултарса пычӗ.

Бригадăсенче культмассăллă ӗçе аван туса пыни те çуракине кӗске срукрах пӗтерме пулăшрӗ. Кашни бригадăрах икшер агитатăр ӗçленӗ, вӗсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечӗсене суйламали Положенисене вӗрентсе тӗлӗшпе çураки вăхăтӗнче икшер занйати туса иртернӗ. Кунпа пӗрлех кашни бригадăрах 4-шар, 6-шар номер стена хаçачӗ тухнă.

Ушанар колхозӗнче

Атнаш колхозниксем ăмăртăва чӗнниче Ушанар колхозниксем хапăлласах йышăнчӗç. Вӗсем: Епӗр те атнашсенчен йулмастпăр, кăçал çине тăрса ӗçленипе кашни гектартан 120 пăтран кайа мар тӗштырă туса илетпӗр,—терӗç. Çамах панă, ӗçе пӗр харăс, пысăк хавасăхпа тытăннă. Ушанар колхозӗ тӗштырăсене 7 кун хушшинче, майăн 3-мӗшне акса пӗтерчӗ.

Колхозра 8 бригадă. Бригадăсем пурте çураки ӗçне пысăк пахалăхпа иртерчӗç. Пахалăх комиссийӗ членӗсем кашни кунхи ӗçе тӗрӗслесе туса хакланă. Агротехника пăхса ӗçлени пулман. 399 гектар çинче хӗл вăхăтӗнче тасатса хатӗрленӗ сурттă вăрлăхсемпе акса хăварнă. Вăрлăхсене йаровизацилесе акнă.

Кăçал колхоз нитрагинизаци туса 6,18 гектар, азотогенезаци туса 7,39 гектар акнă.

Романăв, Архипăв йӗртсе пыракан бригадăсем çураки ӗçӗнче малти вырăна тухрӗç. Уйрăм колхозниксем, сăмахран, М. Кондратйӗв çейăлкăпа акас нормăна куллен 150 процент, А. Григорйӗв плугпа сухалас нормăна 140 процент таран тултарса пычӗç.

Кӗрхи калчасене 319 гектар çинче сӳреленӗ тата апат панă. Халӗ çуртрисене мульчировани тума 40 гектар валли кивӗ улăм хатӗрленӗ.

Халь колхозниксем çӗрулми лартма, кантăр акса хăварма, пахча-çимӗçсем лартма хатӗрленеççӗ.

Икӗ колхоз ăмăртăвӗн малтанхи пăрăхӗ веçленчӗ. Халӗ икӗ колхозсене те акнă тырпула лайăххăн пăхса ӳстерме, калчасене иккӗмӗш хут апат пама хатӗрленеççӗ.

Гр. Калинин.

ИККӖМӖШ ПЯТИЛЕТКĂ

(ТĂВАТĂМӖШ ÇУЛХИ КĂЛАРĂМ)

ЗАЙОМНЕ СЫРĂНСА ИЛНИСЕМ,

ОБЛИГАЦИСЕНЕ ЕСӖР АЛЛА ИЛНӖ-И ?

ИККӖМӖШ ПЯТИЛЕТКĂ (тăваттăмӗш çулхи кăларăм) зайомне илме çырăннă граждансем, облигацисене алла илейменнисем, хăйсем çырăннă тăрăх облигацисене райоври перекет кассине илме пулташ расçӗ.

ОБЛИГАЦИСЕНЕ АЛЛА ИЛМЕ рабочисем тата служащисем предприйатин йе учрежденин бухгалтерийӗнче зайомшăн мӗн чухлӗ тӳлесе пӗтернине кăтартакан справкă илсе тăратмала. Колхозниксем тата уйрăм хуçалăхлă хресченсем займ укçине хывнине кăтартакан расчот квитанцине тăратмала.

Облигацисене алла иличчен, зайом илме çыраннисем, вылăвсене шута кӗрейӗмеççӗ.

ИККӖМӖШ ПЯТИЛЕТКĂ (тăваттăмӗш çулхи кăларăм) ЗАЙОМ ОБЛИГАЦИСЕНЕ ÇЫРĂНСА ИЛЕКЕНСЕНЕ ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМ

1938 ÇУЛХИ июнӗн 1-мӗшӗнчен алла параççӗ

Государствăн Перекет Кассисен тата Государствă Кивçенлӗхӗн Тӗп управленийӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита 227. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 408